Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр

1938
ДЕКАБӖР
8
КӖҪНЕРНИКУН
280(5093) №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

21-мӗш ҫул тухать. ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн хаҫачӗ. Пер №-рӗ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторан — 0—67, ред. заместителӗн—3—97, редакци секретарӗн—4—40, парти пурнӑҫ пайӗн—7—97, йалхуҫалӑх пайӗн — 4—97, совечӗсен пайӗн—0—88, промышленнӑҫ пайӗн—0—85, йалкорсен пайӗн—2—30, дежурнӑйӗн — 6—23.

Уйар ҫанталӑка ҫӗнтерер!

Уйар ҫанталӑк ӗлӗкхи вӑхӑтра етемлӗхӗн хӑрушӑ тӑшманӗ пулнӑ. Уйар ҫанталӑк мӗлйуншар ҫынсемшӗн чухӑнлӑх тата вилӗм илсе килнӗ. Уйар ҫанталӑк пирки пулнӑ выҫлӑхлӑ ҫулсем—тискер те хӑрушӑ ҫулсем ӗмӗр-ӗмӗрӗпе пынӑ. Патша самани вӑхӑтӗнче ҫынсем уйар ҫанталӑка ҫӗнтерме пултарайман. Унчухнехи йалхуҫалӑхӗ, сухапуҫҫӗр пуҫне, машинӑсем ҫинчен, агротехника ҫинчен пӗлмен.

Унтанпа вӑхӑт нумай иртмерӗ. Ҫапах та, хура кунсем—чухӑнлӑх, выҫлӑх кайа йулчӗҫ. Хаљ пирӗн, колхозниксен, уйар ҫанталӑка ҫӗнтерме пур майсем те пур. Ҫирӗпленсе ҫитнӗ йалхуҫалӑхӗшӗн „нимӗнле уйар ҫанталӑк та тата нимӗнле ӑнсӑртлӑх та хӑрушӑ мар" (Молотӑв). Уйар ҫанталӑка ҫӗнтерсе, ҫирӗп тухӑҫлӑ тырпул туса илме партипе правительствӑ пирӗн колхозсене ҫулсеренех вӑйлӑн пулӑшса пыраҫҫӗ. Пирӗн хаљ йалхуҫалӑх машинӗсемпе хӗҫпӑшалланнӑ машинӑ-трактӑрлӑ станцисем, йалхуҫалӑхӗн лайӑх специалисӗсем пур. Колхоз уйхирӗсенче комбайнсемпе трактӑрсем тата ытти машинӑсем ӗҫлеҫҫӗ.

Партипе правительствӑ тӑван ҫӗршывӑн кантӑрпа хӗвелтухӑҫри районӗсене вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешмели бољшевикла программӑ — уйар ҫанталӑка ҫӗнтермели программа пачӗҫ. Ҫав программӑна вӑхӑтра тата пысӑк пахалӑхпа пурнӑҫа кӗртсе пырасси—мӗнпур машинӑ-трактӑрла станцисен, колхозсен тата совхозсен хисеплӗ ӗҫӗ пулса тӑмала.

Пирӗн республикӑри колхозсем уйар ҫанталӑкпа кӗрешес ӗҫре паха опытсем пухрӗҫ, уйар ҫанталӑкра та вӑйлӑ тырпул туса илме вӗренсе пыраҫҫӗ. Кӑҫалхи ҫул—тырпулсене ӳсме начар, уйар ҫанталӑклӑ ҫул пулчӗ. Апла пулсан та республикӑри чылай колхозсем агротехникӑлла ӗҫсене тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе пынипе кӑҫал, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, тырпул начарах мар туса илчӗҫ. Вӑрнар районӗнчи Сталин йачӗпе тӑракан колхоз кӑҫал вӑтам шутпа кашни гектартан 95 пӑт тӗш. тырӑ туса илнӗ. Тутаркас районӗнчи „Хӗрлӗ паттӑр" колхоз вӑтам шутпа гектартан ҫурхи тырӑсем 114-шер пӑт, уйрӑм участкӑсенче—225-шер пӑт пуҫтарса кӗртнӗ. Шӑнкӑртам районӗнчи „Красный Октябрь" колхоз кашни гектартан 115-шер пӑт ыраш, Канаш районӗнчи „Комсомол" колхоз гектартан 100-шер пӑт ыраш, кӗрхи тулӑ—125-шер пӑт туса илнӗ. Ҫакӑн пек примерсене ҫӗршерӗн илсе кӑтартма пулать.

Сложнӑй машинӑсемпе хӗҫпӑшалланнӑ пирӗн колхозсем уйар ҫанталӑка пӑхӑнми пулса пыраҫҫӗ. Вӗсем халӑхсен ҫулпуҫӗ Аслӑ Сталин йулташ ҫулсеренех 7 — 8 миллиард пӑт тӗштырӑ туса илмелле, тесе кӑтартса панине анӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртсе пыма тытӑнчӗҫ. Вӗсем агротехникӑн ҫӗнӗ кӑтартӑвӗсемпе тӗплӗн усӑ курса, халиччен пулман вӑйлӑ тырпул туса илеҫҫӗ. Колхозниксем халӗ ӗнтӗ уйар ҫанталӑкӑн хӑрушлӑхне пӗлмеҫҫӗ. Кӑҫал ҫӑвӗпех ҫӑмӑр пулмарӗ пулсан та. Вӑрнар районӗнчи „Пӗрлешӳ" колхоз членӗсем ӗҫкунӗсем тӑрах 6-шар килограм тӗштырӑ, пӗрер тенкӗ ытларах укҫан илеҫҫӗ. Чылай колхозниксен ҫемйисем 300—400 пӑт тӗштырӑ, 700—800-шер тенкӗ укҫан илеҫҫӗ. Ҫакӑн пек ӗнтӗ агротехникӑна пурнӑҫа кӗртсе пыни тата машинӑсемпе тӗрӗс ӗҫлени резуљтачӗ. Ӗлӗкхи вӑхӑтра чи лайӑх ҫулсенче те тата помещиксен чи лайӑх ҫӗрӗсем ҫинче те 6—7 центнер кӑна тырӑ туса илнине шута илсен, колхозсем хресченӗ мӗн панине ӑнланса илме йывӑр мар ӗнтӗ.

Пайан епӗр Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе Парти Обкомӗ „Чӑваш республикӗнчи колхозсенче ҫирӗп тухӑҫлӑ тырпул туса илесси ҫинчен" йышӑннӑ постановленине пичетлесе кӑларатпӑр. Ҫак постановлени пирӗн колхозсенче агротехникӑлла ӗҫсене анлӑн пурнӑҫа кӗртсе пырас, уйар ҫулсенче те вӑйлӑ тырпул туса илес ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

Вӑл постановленире тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗллӗшпе тумалли агротехникӑлла ӗҫсене тӗплӗн кӑтартса панӑ. Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе Парти Чӑваш Обкомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, пирӗн республикӑра 200 пин гектар ҫинче йур тытса хӑвармала.

Ҫӗре тарӑн сухалани тата тӗрлӗрен минераллӑ удобренисемпе анлӑн усӑ курни, паха та суртлӑ вӑрлӑхсемпе акни тырпул тухӑҫлӑхне вӑйлӑн ӳстерессӗ. Ҫавӑнпа та ҫитес ҫулта колхозсенче тырӑ акмали ҫӗр лаптӑкӗсене трактӑрсемпе 20 — 22 сантиметр тарӑнӗш, лашасемпе 16 — 18 сантиметр тарӑнӗш сухаламала. Унтан кайа мар! 1939 ҫулта ҫуркунне 40 процентран кайа мар йаровизациленӗ вӑрлӑхсемпе акса хӑвармала.

Ҫитес ҫулта кашни колхозрах вӑрлӑхлӑх акнӑ тырӑсене паха ҫитӗнтерме уйрӑм звеносем тумала. Ҫав звеносем паха та суртлӑ вӑрлӑх туса илессишӗн ҫине тӑрса ӗҫлемеле.

1939 ҫулта ҫуркунне 4 пин гектар ҫинче вир сарлака ретпе акмала. Кӗрхи тырӑсене 50 пин гектар ҫинче ҫуркунне апат памала. Калчасене апат панӑ ҫӗрте кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗпе, фекалипе тата ытти минераллӑ удобренисемпе анлӑн усӑ курмала. Ҫавӑнпа та тислӗк, минераллӑ удобренисем хатӗрлес ӗҫе кашни колхозӑн халех тытӑнмала.

Уйар ҫанталӑкпа кӗрешес ҫӗрте агротехника ӗҫӗсем калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Агротехникӑн пур кӑтартӑвӗсене те хӑй вӑхӑтӗнче тата тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе пымала. Йалхуҫалӑхӗнчи стахановецсен агротехника тӗлӗшӗнчи паха опычӗсене анлӑн сарса пымала. Йалхуҫалӑхӗнчи интеллигенцин—агрономсен тата ҫӗрӗҫӗнчи ытти работниксен вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешӗве пуҫарса йертсе пыракансем пулмала.

Хаљ пирӗн колхозсен умӗнче 1939 ҫулта акса хӑварма вырӑнти паха суртлӑ вӑрлӑхсене хатӗрлес задачӑ тӑрать. Вӑрлӑхсене лайӑх суртласа, алпа суйласа тасатса хумала. Вӗсем мӗнле шӑтнине тӗрӗслемеле. Ҫавнашкалах агротехникӑна вӗренессине кашни колхозра пуҫарса йамала. Агротехникӑна тӗплӗн вӗренмесӗр вӑйлӑ тырпул туса илме ҫук. Ку ӗҫре колхозниксене ӑслӑлӑх работникӗсен, йалхуҫалӑх специалисӗсен вӑйлӑн пулӑшса пымала. Йалхуҫалӑх ертелӗн Сталинла Уставне вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешессин ҫирӗп саккунӗ туса хумала.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе Парти Обкомӗ йышӑннӑ постановленине кашни колхоз, кашни колхозник патне ҫитермеле. Постановленире кӑтартнӑ ӗҫсене пурне те вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртсе пыма пӗтӗм колхозниксен массине мобилизацилемеле. Вара епӗр ҫирӗп тухӑҫлӑ тырпул туса илӗпӗр, пирӗншӗн нимӗнле уйар ҫанталӑк та хӑрушӑ пулмӗ.

Колхозлӑ хресченсем, пирӗн телейлӗ тӑван ҫӗршыври пӗтӗм ӗҫҫыннисем пекех, Совет правительствин, бољшевиксен партийӗ тата Аслӑ Сталин йертсе пынипе паттӑрӑн ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн ҫӗнтерӳ туса пыраҫҫӗ. ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе Парти Тӗпкомӗ тата Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе Парти Обкомӗ уйар ҫанталӑкпа кӗрешесси ҫинчен йышӑннӑ постановленисене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртсе пыни социалисӑмлӑ ҫӗрӗҫӗнче ҫӗнӗрен пысӑк ҫӗнтерӳсем тума май парать, колхозлӑ йалӑн кулљтурӑлла тата пуйан пурнӑҫне малала чечеклентерет, тӑван ҫӗршывӑн вӑй-хӑватне татах та ӳстерет.

Совет Сойузӗн Геройӗ лейтенант Винокурӑв йулташ йанӑ салам

Совет Сойузӗн Геройӗ лейтенант Винокурӑв Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗпе ПСК(б)П Шупашкар хула комитетне Пйатигорскран ҫакӑн пек салам йанӑ:

„Сире тата орденлӑ Чӑваш республикӗнчи ӗҫҫыннисене Сталинла Аслӑ Конституци кунӗ йачӗпе ырӑ сунса саламлатӑп. Ивановӑшӑн (Иванова й.—Винокурӑв йулташа пӗчӗкрен пӑхса ӳстернӗ.—Ред.) тӑрӑшнӑшӑн тав тӑватӑп.

Орденлӑ Чӑваш республикӗн ывӑлӗ—Совет Сойузӗн Геройӗ лейтенант Винокурӑв".

Винокурӑв йулташ саламне ответлесе, Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗпе парти хула комитечӗ ҫакӑн пек телеграммӑ йанӑ:

«Есӗр ырӑ сунса саламланине пичет урлӑ Чӑваш республикӗнчи ӗҫҫыннисене пӗлтеретпӗр. Хӑвӑртрах сывалса ҫитме сунатпӑр. Есӗр килессе кӗтетпӗр.

Хула комитечӗ—Романӑвӑ.

Верховнӑй Совет—Андрейӗвӑ».

Испани ачисем Ленинграда ҫитнӗ

ЛЕНИНГРАД, декабӗрӗн 5-мӗш. Пайан Мускав вӑхӑчӗпе 17 сехет те 30 минутра Ленинградри сутуилӳ портне „Феликс Дзержинский" теплоход ҫитнӗ. Вӑл Мадридран, Валенсиран, Барҫелонаран тата республикӑлла паттӑр Испанин ытти хулисенчен 117 ача Совет Сойузне илсе килнӗ. Пристане пухӑннӑ ҫынсем пӗчӗк испанӗцсене пысӑк хаваспа саламласа кӗтсе илнӗ. (ТАСС).

Чӑваш АСС Республикӗнчи колхозсенче ҫирӗп тухӑҫлӑ тырпул туса илмеле тӑвасси ҫинчен

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Обкомӗ 1938 ҫулти нойабӗрӗн 23-мӗшӗнче йышӑннӑ

ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ 1938 ҫулти октябрӗн 27-мӗшӗнче „ССР Сойузӗн кантӑр-хӗвелтухӑҫӗнчи ҫанталӑк уйар тӑракан районсенче ҫирӗп тухӑҫлӑ тырпул туса илмеле тӑвасси ҫинчен" йышӑннӑ постановлени тӑрӑх тата Чӑваш АСС Республикӗнче вӑхӑтран вӑхӑта ҫанталӑк уйар тӑнине шута илсе, колхозсенче ҫирӗп тухӑҫла тырпул туса илмеле тума Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Обкомӗ ҫапла йышӑнаҫҫӗ:

I. 1939 ҫулта ҫирӗп тухӑҫлӑ тырпул туса илме тумали ӗҫсем ҫинчен

1. Агротехникӑлла обйазатељнӑй требовани шутласа, трактӑрпа туртарса сухаланӑ чухне 20—22 сантиметр тарӑнӑшӗнчен ӑшӑх мар тата лашапа сухаланӑ чухне 16—18 сантиметр тарӑнӑшӗнчен ӑшӑх мар сухаламала тӑвас,— сухаланӑ чухне мӗнпур предплужниксемпе усӑ курмала.

1939 ҫултан пуҫласа, массӑлла агротехникӑлла ӗҫ шутласа, хӑмӑла ӑшӑххӑн сухаламала тӑвас.

Кӑтартса панӑ пек тарӑн сухалассине пӑсни ан пултӑр тесе, МТС-сен, совхозсен тата райҫӗрӗҫ пайӗсен агрономӗсене мӗн тарӑнӗш сухаланине тата сухаланин пахалӑхне тӗрӗслесе тӑма хушас.

Колхозсен правленисене МТС трактӑрисӗсенчен сухаланине йышӑнма опытлӑ колхозниксене уйӑрма, ӑшӑх сухаланине палӑртсан кашни хутрах актсем ҫырма, ҫав актсене пӑхса тухма ҫийӗнчех райӗҫтӑвкомсене пама хушас,—райӗҫтӑвкомсене ҫав актсене 10 кун хушшинче пӑхса тухма хушас, актсем тӗрӗс пулсан МТС-сен колхозсем умӗнче МТС колхозсемпе тунӑ договӑрсем тӑрӑх ответ тытмала.

2. Кӗр тыррисене хура ҫӗртме тата ирхи таса ҫӗртме тунӑ ҫӗре ҫеҫ акмала, ҫӗртме уйне урӑх кулљтурӑ акни уйрӑм чухне ҫеҫ пулма пултарать. Хура ҫӗртмесемпе чи малтан кӗрхи тулӑ акма усӑ курмала.

3. Ирхи ҫуртрисене кашни уйрӑм колхозрах 5—6 ӗҫкунӗнчен вӑрӑма йамасӑр акса пӗтермеле.

Тӑпрари нӳрӗне сыхласа усрама тата уйсене ҫумкурӑксенчен тасатма ирхи ҫуртыррисене акас умӗн ҫак ӗҫсене анлӑн туса иртермеле: кӗрхи ҫӗртме тунӑ пирчӗнекен ҫӗрсене—ҫӗнӗрен сухаламала, кӗрхи ҫӗртме тунӑ тӑпра ҫемҫе тӑракан ҫӗрте—кулљтиваци тумала, ҫав вӑхӑтрах тата сӳрелемеле те акмала. Кӗрхи ҫӗртме тунӑ пирчӗнмен, ҫӗр сухакассипех выртакан ҫӗрте тепӗр хут сухаличчен йе кулљтиваци тӑвиччен, сухакасси типнӗ вӑхӑтран пӗр-ик кунран кайа хӑвармасӑр, сӳрелемеле. Кӗрхи ҫӗртме тунине тепӗр хут сухаланӑ чухне 14—15 сантиметр тарӑнӗш сухаламала. Кайран акакан ҫурхи кулљтурӑсене (вир, хура-тулӑ, кантӑр, ҫӗрулми) акмали ҫӗрсене ҫуркунне ирех сӳрелемеле, тепӗр хут сухаламала тата акас умӗн кулљтиваци тумала та унтан сӳрелемеле.

4. Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне, вырӑнсенчи парти, совет, ҫӗрӗҫ органӗсене 1939 ҫулти ҫуркуннерен пӗтӗм ҫӗре 1938 ҫулти тухӑҫри вырӑнти вӑрлӑхсемпе акса хӑвармала тума мӗн кирлине пурне те пурнӑҫа кӗртме хушас.

Вӑрлӑхсене тӗплӗн тасатмала, вӑрлӑх тасатмали машинсемпе—трийӗрсемпе, клейтонсемпе тата уйрӑмах ВИМ-2—пуринпе те усӑ курмала.

Колхозсен вӑрлӑх участкисене ваљљи вӑрлӑх хатӗрлесси ҫине уйрӑмах ҫавӑрӑнса пӑхмала. Ку участкӑсене акса хӑварма чи пысӑк категориллӗ вӑрлӑхсем хатӗрлемеле, вӗсене ик-виҫ хут трийӗр витӗр кӑлармала тата пӑрҫалӑ кулљтурӑсемпе тӗштырӑсене алпа суйламала, ун умӗн триумф тата клейтон витӗр кӑларса суртламала.

Колхозсен вӑрлӑх участкисенчен чи лайӑх пахалӑхлӑ вӑрлӑхсем туса илме, колхозсен правленисене 1939 ҫулта бригадӑсенче йатарласах вӑрлӑх тӑвас тӗллӗшпе ӗҫлекен звеносем уйӑрма хушас. Ҫак звеносен вӑрлӑх участкисенчи пур ӗҫсене те—вӑрлӑхне хатӗрлессинчен пуҫласа ҫӗре ҫемҫетсе хатӗрлесси, акасси тата вӑрлӑх участкинчи тырпула ҫапса тирпейлесси таранах туса иртермеле.

Колхозсене вӑрлӑх тӑвас тӗллӗшпе ӗҫлекен звеносенчи колхозниксене, вӑрлӑх участкинче тырпул тухӑҫӗ колхозри вӑтам хисепрен пысӑкрах пулсан тата вӑрлӑхсем I-мӗшпе II-мӗш категорирен начар мар туса илсен, ӗҫкунӗсене 1,5 хут шутласа пама сӗнес.

5. 1939 ҫулти ҫуркунне ир акакан ҫуртыррисене акмали пӗтӗм талкӑшрен 40 процентран кайа мар йаровизациленӗ вӑрлӑхпа акас.

Райҫӗрӗҫ пайӗсен пуҫлӑхӗсене, МТС-сен, совхозсен директӑрӗсене тата колхозсен правленисене вӑрлӑхсене йаровизацилеме вӑхӑтра хатӗрленсе ҫитме хушас, колхозниксене йаровизаци тӗллӗшпе кирлӗ таран хатӗрлентермеле тата инструкцилемеле, кашни бригадӑна ваљљи пӗр ҫынтан кайа мар хатӗрлемеле, ҫавна тума 1939 ҫулти 1-мӗш квартӑлта МТС-семпе райҫӗрӗҫ пайӗсем ҫумӗнче йаровизаторсен курсӗсене иртермеле.

6. Пысӑк тухӑҫлӑ тата ҫирӗп тухӑҫлӑ вир туса илме, 1939 ҫулхи ҫуркунне вир 4 пин гектар ҫинче сарлака ретпе акса хӑварас, колхозсенче вир акнӑ тата вире пӑхса ӳстернӗ вӑхӑтра ӗҫлеме йатарласа звеносем уйӑрса, сарлака ретпе тата талкӑшпех акнӑ вире трактӑрпа йе лашапа турттарса хушшисене 2—3 хут ҫемҫетмеле тата алӑпа ҫумламала тӑвас.

Вире кӗрхи ҫӗртме тунӑ ҫӗре, обйазатељнӑ тепӗр хут сухаласа тата акас умӗн кулљтивацилесе акмала.

Ҫакӑн пек йӗрке тӑвас: звенона ҫирӗплетсе панӑ талкиш ҫинче кашни гектартан вӑтам шутпа 10 центнӗр ытла вир туса илсен, ҫав звенори колхозниксем хӑйсене тивӗҫлӗ ӗҫкунӗсене илнисӗр пуҫне, преми шучӗпе вир гектартан 10 центнӗртен ытла пухса илнинчен 20 процентне илеҫҫӗ.

7. 1939 ҫулти ҫураки планӗнче пысӑк тухӑҫ паракан тата уйар ҫанталӑка парӑнман пӑрҫалӑ кулљтурӑ пулса тӑракан чина кулљтурине 5 пин гектар акма палӑртас.

8. 200 пин гектар ҫинче йур тытма план йышӑнас.

Райҫӗрӗҫ пайӗсене, МТС-сене тата колхозсене ҫак хӗл хушшинче уйсенче йур тытма халех хатӗрленме тытӑнма хушас, ҫакна тума уйхир ӗҫӗн кашни бригадине йур тытмали план памала, ҫавӑн пекех тата 1938 ҫулти декабӗрӗн 20-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр уйра йур тытмали йавӑҫ, улӑм тата ҫапӑ шчитсене, ытти хатӗрсене те хатӗрлесе ҫитермеле.

9. 1939 ҫулта ҫуркуннепе кӗрхи тырӑсене 50 пин гектар ҫинче апат пама план йышӑнас, вӗсене апат пама чи малтан вырӑнти удобренисемпе (тислӗк шывӗ, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, фекали т. ыт. те) ҫавӑн пекех минераллӑ удобренисемпе усӑ курмала, ҫавсене ҫуркунне йур кайнӑ хыҫҫӑн ирхи вӑхӑтра ҫӗре памала.

Чылай районсенче (Патӑрйел, Йелчӗк, Шӑнкӑртам, Шӑмӑршӑ, Пӑрачкав, Кувакинӑ, Улатӑр т. ыт. те) тислӗке пӗтӗмӗшпех [illegible] турттарманнине шута илсе колхозсен правленийӗсене 1939 ҫулхи хӗллепе ҫуркуннехи вӑхӑтра тислӗк запасӗсене пӗтӗмпех ҫӗртме уйӗсене турттарма, ҫав вӑхӑтрах тата вырӑнти ытти удобренисемпе те—торф, ил т. ыт. те—усӑ курма хушас.

10. Ҫак постановленине пурнӑҫа кӗртсе уйар ҫанталӑкпа кӗрешмели практикӑлла ӗҫсене палӑртса хатӗрлеме тата колхозсем, МТС-сем, совхозсем ҫуракине хатӗрленсе ҫитнине тӗрӗслеме декабӗр—йанвар уйӑхӗсенче агрономсен, колхозниксен тата совхозсен работникӗсен районсенчи канашлӑвӗсене туса иртерес.

11. Участкӑсенчи агрономсен квалификацине хӑпартма 1939 ҫулти йанвар—март уйӑхӗсенче 100 ҫынна ваљљи уйӑхлӑх курс организацилес.

II. Чӑваш АСС Республикӗнчи колхозсенче ҫирӗп тухӑҫлӑ тырпул туса илме малашне тумали ӗҫсем ҫинчен

12. Чӑваш АСС Республикӗнчи пур колхозсенче те 7—8—9 уйлӑ пусуҫаврӑнӑшӗсем тӑвас, уйрӑм колхозсенче 10 уйлӑ пусуҫаврӑнӑшӗсем пулма пултараҫҫӗ.

7—8—9 уйлӑ пусуҫаврӑнӑшӗсем тӑвассине ҫакна хисепре тытса пурнӑҫа кӗртсе пымала: малашне кашни колхозрах, кӑҫҫа панӑ уйсен чиккисене пӑсмасӑр, хура ҫӗртме пуссилӗ тата нумай ҫуллӑха пыракан курӑксем акнӑ пусуҫаврӑнӑшӗ ҫине куҫма май пултӑр.

Малашне клевӗре обйазатељнӑ тимофейӗвкӑпа хутӑштарса акмала. Пусуҫаврӑнӑшӗсене тунӑ чухне нумай ҫула пыракан курӑксене акассине ҫӗнӗ ҫӗрсене акмала тунӑ шутран ӳстермеле, кӗрхи тырӑсене—уйар ҫанталӑка парӑнман кулљтурӑсене—акассине нийепле те чакармала мар.

13. Йуханшывсен тата ҫырмасен айлӑмӗсенче ӳсекен вӑрмансемпе вӗтлӗхсене, шывсем типесрен тата ҫырмасем ишӗлесрен сыхлакансӗсене, пӗтерме чарас. Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне, райӗҫтӑвкомсене тата колхозсен правленийӗсене ҫав вӑрмансемпе вӗтлӗхсене сыхлама кирлӗ ӗҫсене тума хушас.

Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне, райӗҫтӑвкомсене тата колхозсен правленийӗсене ҫаплах ишӗлекен пур ҫырмасене те ҫирӗплетме тата унта йывӑҫсем лартма колхозсен уйрӑм бригадисем ҫумне ҫыпӑҫтарса пама хушас.

14. Ҫӗмӗрле, Йӗпреҫ тата Пӑрачкав районӗсенчи иртнӗ вӑхӑтра уйӑрнӑ куҫса лармали фонд республикӑри чи ҫӳлӗ, республика территорийӗ тӑрӑх йухса выртакан йуханшывсем унтан пуҫланакан вырӑнта иккенне, ҫав территорире вӑрмансене пӗтерни куҫкӗретех сӑтӑрҫӑла пулса тӑнине паллӑ туса малашне ҫав вӑрмансене пӗтерме, вӗсем уйар ҫанталӑкпа кӗрешес ӗҫре пысӑк вырӑнта тӑнине астуса, чарас.

Чӑваш АСС Республикӗнчи Йелчӗк, Патӑрйел тата Шӑнкӑртам районӗсенче 1938 ҫултан вӑрман мелиораци ӗҫӗсене (уйсене сыхлама вӑрман лартасси) малала туса пыма кирлӗ, тесе шутлас.

Армантресчӗ тата хӑшпӗр колхозсен правленисем йуханшывсен вӑйӗпе усӑ курасси ҫине йӗрӗнсе пӑхнине тата пуринчен ытла нефтьпе ӗҫлекен двигательлӗ армансем лартнине—вӗсен ҫав практикине сивлес.

Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне, Вырӑнти промышленнӑҫ Халӑх Комиссариатне, Армантрестне тата колхозсен правленисене йуханшывсем ҫинчи арман хуҫалӑхне йӗркене кӗртме, армансен кивӗ пӗвисене пӗтӗмпех пӗвелесе лартма хушас.

15. Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне, райӗҫтӑвкомсене тата райҫӗрӗҫ пайӗсене 1939 ҫулта ҫӗнӗрен 46 пӗве тума, кивӗ пӗвесене 20-шне йусама, кивӗ пӗвесене 15 пин кубла метр чухлӗ тӑсатма, республикӑри пур колхозсенче те кивӗ вак (пройектсӑр) пӗвесене тӑсатма тата ҫӗнӗ пӗвесем тума, ҫав пӗвесем тавра йывӑҫсем лартса тухма хушас.

16. 1939 ҫулхи йалхуҫалӑх ӗҫӗсен планӗнче Йелчӗк, Патӑрйел, Шӑнкӑртам, Трак, Елӗк, Вӑрнар, Ишлей районӗсенче 1350 гектар ҫӗр ҫинчи тырпулсене шӑвармала тума палӑртас.

* * *

ПСК(б)П Обкомӗ тата ЧАССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ орденлӑ Чӑваш республикӗнчи мӗнпур колхозниксемпе колхозницӑсем, йалхуҫалӑх специалисӗсем, МТС-семпе совхозсен рабочийӗсем, парти, совет тата комсомол организацийӗсем, халӑх тӑшманӗсен йулашкийӗсемпе пурине те татӑклӑн кӗрешсе пырса, йалхуҫалӑхӗнче сӑтӑрлӑх йулашкийӗсене пӗтерсе пырса, социалисӑмлӑ ӑмӑртупа массӑлла стахановла йухӑма сарса, 1939 ҫула социалисӑмлӑ йалхуҫалӑхӗнче халиччен курман ҫӗнтерӳсем тумали ҫулталӑк тата колхозлӑ ӗҫ халиччен курман показательсем панӑ ҫулталӑк туса хума ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсемпе ӑнӑҫусем тӑвӗҫ тесе тата халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин йулташ ҫуллевех 7—8 миллиард пӑт тӗштырӑ туса илме панӑ лозунга пурнӑҫа кӗртӗҫ, тесе шанса тӑраҫҫӗ.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗ заместителӗ А. СОМӐВ.

ПСК(б)П Обкомӗн секретарӗ А. ВОЛКӐВ.

МУСКАВ, КРЕМЉ

Иосиф Виссарионӑвич Сталин йулташа

Епӗр, Шупашкар хулинчи—орденлӑ Чӑваш республикӗн столицинчи партипе совет активӗ, стахановӗцсем тата интеллигенци, Сталинла Конституци кунӗ йачӗпе хула совечӗн савӑнӑҫлӑ ларӑвне пухӑннисем, Сире, Ленинӑн ӗҫне генилле малала илсе пыракана, социалисӑмӑн ҫӗнтерӗвӗсене хавхаллантараканне тата организатӑрне, тӗнчери пӗртен-пӗр чи демократиллӗ Сталинла Конституцине тӑвакана бољшевикла хӗрӳллӗ салам йаратпӑр.

Сталинла Конституцире совет ҫӗршывӗнче Ленин—Сталин партийӗ, Есӗр, Сталин йулташ, тӗнчери ӑсларан та ӑслӑ ҫын, йертсе пынипе тунӑ тӗнче историйӗнчи паллӑ ҫӗнтерӳсене ылттӑн саспаллисемпе ҫырса хунӑ.

Сталинла Конституци йалавӗ айӗнче халӑхсен никам пӑсайми туслӑхӗ чечекленет, ӗҫҫыннисен пуйанлӑхӗпе кулљтурлӑхӗ ӳсет, совет государствин вӑй-хӑвачӗ ҫирӗпленсе пырать.

Пирӗн тӑван ҫӗршыври ӗҫҫыннисем икӗ ҫул хушши Сталинла Конституципе пурӑнса промышленнӑҫ, йалхуҫалӑхӗ, кулљтурӑ йенӗпе ҫӗнӗрен чаплӑ ҫитӗнӳсем турӗҫ, ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗ татах та лайӑххӑрах пулса тӑчӗ.

Ҫак икӗ ҫулталӑк промышленнӑҫра, йалхуҫалӑхӗнче ӗҫтухӑҫлӑхӗ хӑпарса пынӑ, халӑх массин активлӑхӗпе политикӑлла ӑсталӑхӗ ӳснӗ, халӑх тӑшманӗсене—фашисӑма сутӑннӑ троцкисла-бухаринла, буржуалла - националисла бандитсене хирӗҫ хайаррӑн кӗрешсе пынӑ ҫулталӑксем пулса тӑчӗҫ.

ССРС, сойузлӑ тата автономлӑ республикӑсен Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗсенче нумай мӗлйунлӑ совет халӑхӗ хӑйӗн морађлӗ тата политикӑлла пӗрлӗхне, ССР Сойузне—пӗтӗм тӗнчери пролетариатӑн ҫӗршывне—ҫирӗп кӑкӑрпа тӑрса сыхлама хатӗррине, бољшевиксен партине, унӑн Тӗп Комитетне тата Сире, Сталин йулташ, чӗререн йуратса тӑнине пӗтӗм тӗнче умӗнче кӑтартса пачӗ.

Сталинла Конституци кунӗнче Сире, Сталин йулташ, Чӑваш республикӗнчи пӗтӗм ӗҫҫыннисен йачӗпе ҫакӑн ҫинчен шантарса калатпӑр: Ленин—Сталин партийӗ тавра епӗр татах та таччӑнрах пӗтӗҫетпӗр, револђуцилле сыхӑлӑха татах та вӑйларах ӳстерсе троцкисла-бухаринла тата буржуалла-националисла бандитсене хирӗҫ хайаррӑн кӗрешсе пыратпӑр. Чӑваш республикӗнчи ӗҫҫыннисен умӗнче тӑракан хуҫалӑхла-политикӑлла задачӑсене пурнӑҫа кӗртес тӗллӗшпе, бољшевикла кӗрешетпӗр—ҫаксене туса епӗр Сталинла Конституци йалавӗпе, Маркс—Енгељс—Ленин—Сталин йалавӗпе коммунисӑмӑн ҫӗнӗ пысӑк ҫӗнтерӗвӗсем патне малала каятпӑр.

Социалисӑмӑн тата рабочисемпе хресченсен демократин ҫӗнтерӗвӗн Конституцийӗ сывӑ пултӑр!

Сывӑ пултӑр Ленинӑн—Сталинӑн паттӑр партийӗ!

Сывӑ пултӑр Аслӑ Сталин!

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пленум решенисене сÿтсе-йавассĕ

ШĂХАСАН. Декабĕрĕн 1-мĕшĕнче ПСК(б) Парти Обкомĕн II-мĕш пленумĕн решенисене сÿтсе-йавас ĕçтупа районти учрежденисенче ĕçлекен коммунисçен пухăвĕ пулса иртрĕ. Парти райком çекретарĕ А. Сорокин йулташ пленум йышăннă решенисем çинчен доклад туса пачĕ. Сорокин йулташ хăйĕн докладĕнче Обком пленумĕ Канаш парторганизаци ĕçĕнче палăртнă пысăк çитменлĕхсем Шăхасан районĕнче те пурри çинчен каларĕ. Государствăна аш-какай тăратасси, тырпул, натурплатă, çĕрулми парасси, укçа-тенкĕ пухасси районта йапăх пырать. 4-мĕш кварталти икĕ уйăх хушшинче укçа-тенкĕ пухас плана 50 процент çеç тултарнă. Районти финанс пайĕпе хатĕрлев организацисем, финанспа хатĕрлев уполномоченнăйĕ çумĕнчи агĕнтсем халăх хушшинче ăнлантарулă ĕçе куллен туса пырас вырăнне администрацилле йĕркесемпе ĕçлесе пыма тытăннă. Хатĕрлев халăх комиссариачĕн уполномоченнăйĕ те унтан ÿксе йулмасть. Çав вăхăтрах районти финанс пайĕ айăпĕпе 94 хуçалăх çине лашасемшĕн налог хумасăр хăварнă. Судпа следстви оргăнĕсем суда панă материалсене вăхăтра пăхса тухассишĕн васкамаççĕ. Суд оргăнĕсенче 700 ĕç ытла ку таринччен пăхса тухмасăр выртаççĕ. Йединоличниксенчен 46 проценчĕ ку таринччен те государствăна аш-какай тăратас ĕçе хутшăнман.

Партилĕ-политикăлă ĕç, партине çĕнĕрен членсем илесси те çитейлĕксĕр тăрать. Партине çĕнĕрен илес ĕç пуçланнăранпа та 41 çынна, вăл шутра колхозниксенчен 11 çынна çеç парти кандидачĕсен ретне илнĕ.

В. Чернов.

Интеллигентсем ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленине ырлаççĕ

„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне“ кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен“ ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă постановление совет интеллигенцийĕ пысăк хавалăхпа кĕтсе илчĕ.

— Ку, таранччен пирĕн çине иккĕмĕш суртри çын çине пăхнă пек пăхнă. Врачсене пухса докладсем, лекцисем вуласа пани пулман, теççĕ Шупашкарти врачсем.

Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацине поликлиникă, трахом институчĕ, диспансĕр, пуљницă—пĕтĕмпе 13 организаци кĕрет. Ку организацисенче 1200 çын ытла ĕçлет. Пĕр врачсемех 100 çын ытла. Хăшпĕр врачсем обшчĕствăлă ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Врач Кузнецов йулташ пуљницăри агитатăр. Вăл пуљницăра ĕçлекенсене партипе правительствă йышăннă решенисем çинчен куллен ăнлантарса парать. Вăл „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне“ кĕнеке кăларнă хыççăнах пуљницăри служăшчисене парти историне вĕрентме тытăннă. Мухина йулташ та диспансĕрти служăшчисене парти историне вĕрентет. Кун пек активиссене темиçе те кăтартма пулать. Анчах партком парти историне вĕренме çав активиссене пулăшман. Çакăншăн критиклеççĕ коммуниссем партком ĕçне.

Нумай пулмасть пулса иртнĕ пуху парти историне вĕренекенсене пулăшма лекцисем, консуљтацисем организациллеме йышăнчĕ. Парти историне вĕренекенсем валљи йатарласа уйрăм пÿлĕм тумала турĕ. Ку пÿлĕмре Маркс, Енгељс, Ленин, Сталин произведенийĕсем, хаçат-журналсем, географи карттисем, парти истории аљбомĕсем пулмала. Ку пÿлĕмрех ăнланман ыйтусене ăнлантарса паракан консуљтант пулмала. Пуху ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленине комсомолецсен тата профсойуз членĕсен пухăвĕсенче ăнлантарса пама йышăнчĕ.

Почтăри йĕрнесĕрлĕх

ТРАК. Хаçатсенче „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ“ тата консуљтаци парса çырнă материалсем пичетленсе тухма пуçланăранпа хаçат çырăнса илекенсен шучĕ те нумай ÿсрĕ. Тракри МТС-ра ĕлĕк „Чăваш Коммунĕ“ хаçата дирекципе бригадăсем валљи çеç çырăнса илетчĕç. Парти историйĕ пичетленсе туха пуçласан ăна пур коммуниссем те çырăнса илчĕç тата комсомолецсемпе ытти работниксем те нумай çырăнса илеççĕ. Вĕсем хаçатăн кашни номĕрнех тем пек кĕтсе тăраççĕ.

Анчах çыхăну уйрăмĕнче ĕçлекенсем çакна халĕ те ăнланса илмен. Вĕсем хаçат-журналсене вулакансем патне вăхăтра çитерес ĕçе нимĕн чухлĕ те хакламаççĕ. Нойабĕрĕн йулашки кунĕсенче хаçатсене кĕтсе ывăнтăмăр. Апăрайипе нойабĕрĕн 27-мĕшĕнче епĕ почтă уйрăмне кайса пăхрăм. Хаçатсем районна пынă пулнă, анчах вĕсене валеçсе паман. Вара епĕ улта кушăн (нойабĕрĕн 18—24-мĕшĕсенче тухнисене) пĕр харăс илсе карăм. Мĕнрен килет-ха ку?

Акă мĕнрен. Çыхăну уйрăмĕн пуçлăхĕ Филиппăв йулташ районна хаçатсем пырсан:—„Райкомпа райĕçтăвкома хăварттрах кайса парăр, ыттисем валљи кайран та салатăр“, тет.

Çапла ĕнтĕ, Филиппăв йулташ ытти учрежденисенче ĕçлекенсем çине „иккĕмĕш суртлă“ çынсем çине пăхнă пек пăхăран, районна пынă хаçатсем икĕ-виçĕ кун почтăра выртаççĕ. Руководителсем умĕнче йăпăлтатса, ытти вулакансене икĕ-виçĕ кун хаçатсăр хăвараççĕ.

Г. Закамский.

Райком инструктăрĕсем хăйсен ĕçне тумаççĕ

И. Григорйĕв йулташ çулталăк ытла ĕнтĕ ПСК(б)П Иетĕрне райкомĕн инструктăрĕ пулса ĕçлет. ПСК(б)П райкомĕ ăна виçĕ пуçламĕш парторганизаци тата кандидатсен пиллĕк группи çумне çирĕплетнĕ. Паллах, райком инструктăрĕн тĕп ĕçĕ—çак парторганизацисене партилĕ-политикăлă ĕçсене лайăхлатма пулăшасси пулать. Парторганизацисенчи çитменлĕхсем çинчен кĕске вăхăтрах райкома пĕлтерсе, çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме тăрăшмала. Пуçламĕш парторганизацисенчи ĕçсене лайăх пĕлсе тăрас пулсан, унта час-часах пулмала. Мĕншĕн тесен, отчотпа суйлав пухăвĕсем пулса иртнĕ хыççăн пуçламĕш парторганизацисен руководствисене çĕнĕ çынсем пычĕç, вĕсене куллен ĕçре пулăшса пымала.

Пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕсене пĕлсе тăрас пулсан, райком инструкăрĕн пуçламĕш парторганизацисенче пулса иртекен коммуниссен пухăвĕсенче пулни кирлĕ. Районри пур пуçламĕш парторганизацисенче те парти пухăвĕсем пĕр кун хушшинче (кашни уйăхăн 1—16-мĕшĕсенче) пулнă пирки райком инструктăрĕсем ку пухусенче пуринче те мар пулаççĕ. Парторгсем чылайăшĕ пуху протоколĕсене те райкома тăратмаççĕ. Чебакăвăри пуçламĕш парторганизаци икĕ уйăх хушшинче пĕр протокол та райкома тăратман, çак вăхăтра инструктăр та ку организацире пулман. Уйрăм коммуниссемпе калаçнă тăрăх Чебакăвăри парторганизацинче октябĕр уйăхĕнче пĕр пуху кăна пулнă, нойабĕр уйăхĕнче пĕр пуху та иртермен. Райком инструктăрĕ пулăшайман пирки ĕнтĕ, пухусене хатĕрленмесĕр иртереççĕ, пĕтĕмĕшлĕ решенисем йышăнаççĕ, йышăннă решенисене пурнăçа кĕртмеççĕ.

Отчотпа суйлав пухăвĕнче Стрелецки колхозĕ çумĕнчи парторг ĕçне çителĕксĕр, тесе хак панă. Паллах, инструктăрăн çак организаципе интересленмеле пулнă. Григорйĕв йулташ ку организацине отчотпа суйлав пухăвĕ хыççăн пĕрре те кайса курман-ха.

Григорйĕв ĕçлекен участкăра 8 сочувствуйушчи. Вĕсем мĕнле ĕçлеççĕ, мĕнле вĕренеççĕ? Григорйĕв йулташ кун çинчен каласа пама пултараймасть. Ваçилйĕв йулташ (Йадрино йалĕнчен) 1934 çултанпа сочувствуйушчисен ретĕнче тăрать. Вăл парти ретне кĕме хатĕрленсе çитнĕ, рекомендаци тупайман пирки партине кĕмесĕр тăрать. Инструктăр ăна пулăшу паман.

Мĕн тăвать инструктăр? Григорйĕв инструктăр уйăхра 6 кун хушши пропагандă ĕçĕпе ĕçлет. Вăл икĕ кружока йертсе пырать. Хăй парти истори кружокĕнче вĕренет. Август уйăхĕнчен райком инструктăрĕсене кашни уйăхрах хăйсен пĕлĕвĕсене хăпартма виçĕ кун хушши ĕçрен хăтарнă. Ку кунсенче инструктăрсем хаçат-журналсем вуланă, ĕç планĕсем тунă. Август уйăхĕ иртнĕренпе инструктăрсем çав кунсемпе усă курмаççĕ. Çавăнпа та пулмала, инструктăрсем вĕренмеççĕ, хаçат-журналсене те пăхса пыраймаççĕ, плансăр ĕçлеççĕ.

Райком çекретарĕсем инструктăрсене вĕрентсе, ĕçре пулăшса пымаççĕ. Райком çекретарĕсем пире пухса калаçнине астумастпăр епĕр, теççĕ инструктăрсем. Вĕсем хăйсем тĕллĕн ĕçлеççĕ, нимрен ытла жалăбăсемпе лараççĕ. Ку вĕсен тĕп ĕçĕ тесен те тĕрĕсех пулĕ.

Жалăбăсене тĕрĕслени кирлĕ, анчах вăл инструктăрăн тĕп ĕçĕ мар. Инструктăрăн тĕп ĕçĕ вăл—пуçламĕш парторганизацисене партилĕ-политикăлă ĕçсене лайăхлатма пулăшасси пулса тăрать. Акă, чылай пуçламĕш парторганизацисенче ĕç планĕсем çук. Вĕсене ĕç планĕсем тума, ку плансене пурнăçа кĕртме пулăшсан пит аван пулмала. Районра чылай вăхăт хушши халăх тăшманĕсем партипе хуçалăх ĕçĕсенче сăтăрла ĕçсем туса пурăннă. Райком инструктăрĕсен пуçламĕш парторганизацисенче партилĕ-политикăлă ĕçсене вăйлатса йанипе халăх тăшманĕсен йулашкисене çапса çĕмĕрме, вĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене хăвăрт пĕтерме пулăшмала.

П. Перлов.

Комсомолĕцсене—ответлă ĕçе

ПСÇЛКС Тутаркас райкомĕ йулашки вăхăтра чылай комсомолĕцсене ответлă ĕçе лартрĕ. Илйинкă йалсоветĕнчи пуçламĕш организаци çекретарĕ пулнă А. Куçмина йулташ халь районри парти кабинетĕнче ĕçлет, ăна парти кандидатне илнĕ.

Чуманкассинчи „Трудовик“ колхозри комсомолĕц В. Антонăв йулташа комсомол райкомĕн инструктăрĕ пулса ĕçлеме лартнă. Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкултан отличнă паллăсемпе вĕренсе тухнă комсомолĕц Г. Суворăв йулташ халь комсомол райкомĕнче пионерсен пайĕн заведуйушчийĕ пулса ĕçлет. „Трудовик“ колхозра пропагандис тата агитатăр пулса ĕçленĕ С. Орехăв йулташа халь йалсовет председателне суйланă.

Хăйсен пултарулăхне ĕçре кăтартнă чылай комсомолĕцсем халь шкулсенче пионер отрйачĕсен вожатăйĕсем пулса ĕçлеççĕ.

Анчах, ĕçре палăрнă комсомолĕцсене ответлă ĕçсене лартасси халлĕхе çителĕклĕ пырать теме çук-ха. Социалисăмшăн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлекен комсомолĕцсене малашне те ответлă ĕçсене лартса пымала тата вĕсене куллен пулăшмала.

Г. Соловйов.

Социалисăмлă ĕç

ССР Сойузĕн гражданĕсен ĕçлев прави пур. Ку права çинчен Сталинла Конституци çине ылтăн саспалисемпе çырса хунă. Унпа епĕр, совет ĕççыннисем, кулленхи пурнăçра усă куратпăр.

Капиталисăмла çĕршывсенче ĕçлев прави пурнăçлă пулма пултараймасть. Мĕншĕн тесен, унта влаç капиталиссен, пуйансен, купцасен аллинче. Унта ĕçхатĕрĕсем, пуйанлăхсем мул хуçисен — капиталиссен аллинче тăраççĕ. Вĕсем ĕççыннисене ытларах ĕçлеттерсе хăйсене валљи тупăш ытларах тăвассишĕн çеç тăрăшаççĕ. Çавăнпа капиталисăмлă çĕршывсенче ĕççынни хисепре мар.

ССР Сойузĕнчи Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă революци ĕçлев правине пурнăçлă турĕ. Пирĕн çĕршывра ĕçлев прави пуйан та куљтурлă пурнăç çăлкуçĕ пулса тăрать. Ĕçлев прави мĕлйуншар ĕççыннисене социалисăм строительствине йăвăçтарчĕ. Ирĕклĕ, социалисăмла ĕçлев прави çынсене вĕрентсе ÿстерет, савăнăç парать. Çак ырлăхсене кашни совет ĕççынни хăйĕн кулленхи пурнăçĕнче курать.

Епĕ Çĕмĕрлери „Бољшевик“ савăтра ĕçлеме пуçланăранпа сакăр çул çитрĕ ĕнтĕ. Савăтра ĕçлеме пуçланă чух манăн нимĕнле квалификаци те пулман. Малтанах ахаљ ĕçсенче ĕçлерĕм, унтан слесăр пулса ĕçлеме тытăнтăм. Савăтри инженерла-техникла работниксем йăланах пулăшса пынипе, часах епĕ слесăрăн ĕçне хăнăхса çитсе алла илтĕм, вара мана слесăра куçарчĕç.

Малашнехи ĕç мана тата малала кайма пулăшрĕ. Епĕ ĕçлеме йуратăтăп, йăвăр пулсан ăна çĕнсе илессишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешетĕп. Слесăрта кăштах ĕçлесен акă мана ответлă вырăна—çменă маçтăрне куçарчĕç. Виçĕ çул иртрĕ ĕнтĕ çменă маçтăрĕнче ĕçлеме пуçланăранпа. Калас пулать, ку ĕçре те епĕ чылайах улшăнусем турăм.

Халĕ манăн çменăра аллă тăватă çын. Вĕсенчен стаханăвĕцсемпе ударниксем хĕрĕх ултă çын шутланаççĕ. Стаханăвла йухăм вăйлансах, саралсах пырать. Çменă кашни кунах плана 101—110 проценгшар тултарать. Рабочисем хăйсен квалификацине хăпартас тесе кружоксемпе шкулсене вĕренме çÿреççĕ. Рабочисем пысăкрах разрйадсем çине ĕçлеме куçассишĕн, стаханăвла ĕçлессишĕн кĕрешеççĕ. Урăхла пулма та пултараймасть, мĕншĕн тесен социалисăмла ĕç пире куллен çĕклесе пырать. Акă халĕ рубиљщик А. Никонорăв йулташ куллен 35—40 тоннă вутă вакласа плана 130 — 140 процент, диффузорщчик И. Наумăв йулташ 105—120 процент тултараççĕ. Ножеточ Тимофейĕв, кестнеровщчиçă Антонăвă йулташсем те хăйсене панă ĕçе отличнă туса пыраççĕ. Çак стаханăвĕцсемшĕн те савăта килсен малтанах техникăна, производствă йĕркине пĕлмен пирки йăвăрлăхсем пулнă. Халĕ ĕнтĕ йăвăрлăхсене çĕнсе илнĕ хыççăн савăнсах ĕçлеççĕ.

Пирĕн ĕçукçийĕ те ÿссех пырать. Пĕр-икĕ çул кайала уйăхне 160—200 тенкĕшер ĕçлесе илнĕ рабочисем халĕ 250—300 тенкĕшер ытла илеççĕ. Акă, тĕслĕхшĕн хамах илетĕп. Епĕ малтанах 180—200 тенкĕшер ĕçлесе илнĕ, халĕ 450 тенкĕ илетĕп.

Кăçал епĕ коммуниссен парти членĕн кандидатне кĕтĕм. Çакă ман çине татах та пысăк обйазăннăçсем хурать. Епĕ малашне те коммуниссен партийĕ кăтартнă çулпа пырса хамăрăн социалисăмла тăван çĕршыва татах та çирĕплетессишĕн, унăн хăватне татах та ÿстерессишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме пулатăп.

Павел Миронăв.

Çĕмĕрлери „Бољшевик“ савăтри çменă маçтăрĕ.

Ĕççыннисем курортсемпе санаторисенче

Пирĕн çĕршывра кашни гражданинăн канăç прави пур. Ĕççыннисем вăл правапа санаторисенче, курортсенче тата кану çурчĕсенче канса усă кураççĕ. Кăçал пирĕн республикăри рабочисем, колхозниксем тата интеллигентсем санаторисемпе курортсенче нумайăн пулчĕç.

Хăма çуракансемпе йăвăç каскалакансен тата туллимар вăтампа вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профеççилĕ сойузĕсен йĕнĕпе кăна кăçал курортсемпе санаторисенче 216 çын, хамăр республикăри санаторинче 201 çын тата канмали çуртсенче 1240 çын пулнă. Кунсăр пуçне хăма çуракансемпе йăвăç каскалакансен професçилĕ сойузĕ рабочисене 620.000 тенкĕ государствăн страховани укçипе пулăшнă.

Чăваштрахкассă курортсемпе санаторисене 160 çын, канмали çуртсене 1070 çын йанă. Çавăн пекех Чăваш АССР Социаљнăй обеспечени Халăх комиссариачĕ инвалидсемпе пенçионерсене 68 çынна курортсемпе санаторисене кайма путĕвкăсем туйанса панă. Чăваш-древпромсойуз йĕнĕпе алăсталăх ертелĕсенче ĕçлекенсем 77 çын курортсемпе санаторисенче пулнă.

Кусемсĕр пуçне Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх комиссариачĕ тата профсойузсен йĕнĕпе темиçе çĕршер çын курортсенче, санаторисенче, канмали çуртсенче тата екскурççисенче пулса канă.

Йалта ача çуратмали çурт уçăлчĕ

Ишлей районĕнчи Тăрăн йалĕнче çак кунсенче ача çуратмали çурт уçрĕç. Ача çуратмали çурта акушеркă килчĕ. Вăл тăрăшса ĕçлет. Ку çурт çумĕнче ачасене пăхса çитĕнтерес ыйтусемпе консуљтаци те пулать.

Галкинă.

ПСК(б)П Историне вĕренекенсене пулăшу

Ленин çырнă „Что делать?“ кĕнеке çинчен

„Ленинăн 1902 çулта кăларнă „Что делать?“ кĕнеки—марксисăм-ленинисăм литературинчи гениллĕ произведенисенчен пĕри. Çак кĕнекепе Ленин бољшевиксен партийĕн идеологилĕ никĕсĕсене хывнă. „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕнче“ В. И. Ленинăн çак гениллĕ кĕнекин пысăкран та пысăк пĕлтерĕшне кăтартса çапла çырнă:

„Что делать?“ кĕнекен историлĕ пĕлтерĕшĕ Ленин çав чаплă кĕнекере çаксене туннинче пулать:

1) Марксисла шухăшăн историнче чи малтанхи хут оппортунисăмăн идейăлă пуçламĕшĕсене тымарĕсем таранах уçса кăтартнă, оппортунисăмăн пуçламĕшĕсем, нимĕнрен малтан, рабочисен йухăмĕн стихийлăхне мала хунинче тата социалисăмлă ăстăнăн рабочисен йухăмĕнчи рољне пĕчĕклетнинче пулнине кăтартса панă;

2) Теорин, ăстăнлăхăн, рабочисен стихийлă йухăмне революцилентерсе тата йертсе пыракан вăй пулса тăракан партин пĕлтерĕшне çÿле çĕкленĕ;

3) Марксисăмăн тĕп положенине марксисла парти вăл—рабочисен йухăмĕ социалисăмпа пĕрлешсе тăни пулать текенскерне, питех те тĕплĕн çирĕплетсе панă;

4) Марксисла партин идеологилĕ никĕсĕсене гениле туса хатĕрленĕ.

„Что делать?“ кĕнекере çырса панă теорилĕ положенисем кайран бољшевикла партин идеологийĕн никĕсĕ пулса тăнă“ („ПСК(б)П Историйĕ“, стр. 37—38).

* * *

„Что делать?“ кĕнекене В. И. Ленин революци пысăккăн çĕкленсе çитнĕ тапхăрта çырнă. Рабочисен йухăмĕ Роççийăра унчухне самодержавипе тытăçса хытăн çапăçасси патне çитнĕ (1901 çулти Обуховски стачка, 1902 çулти Батумире пулнă стачкă тата демонстраци, 1902 çулти Ростовскри стачкă). Хресченсен йухăмĕ те ÿснĕ, патша йĕрки пусмăрласа пурăннă халăхсем хушшинче наци ирĕклĕхе кăларассишĕн пыракан йухăм вăйланнă.

Мĕнле пулнă-ха унчухнехи вăхăтра Роççийăри социал-демократин љару-тăрувĕ? Ленин социал-демократин ку тапхăрти аталанăвне (1898 çултан пуçласа) „атăшса, сапаланса кайнă, сулкаланчăк“ тапхăр тенĕ. Унчухнехи тапхăршăн хăйне уйрăм паллă вăл—программăпа устав, пĕрлĕхлĕ центр пулманни, организацилĕ ĕçре кустаршчинă пулни, кружковщчинă, социал-демократсем хушшинче оппортунисла йухăм—теорилĕ атăшупа организацилĕ кустарничĕствăна мухтакан „економисăм“ сарални пулнă.

Социал-демократсен тĕп задачĕ тесе Ленин централисăмлă çирĕп парти—рабочи класăн руководителĕ, самодержавипе капиталисăма хирĕç кĕрешнĕ çĕрте пĕтĕм халăха йертсе пыма пултаракан руководителĕ тăвасси пулать, тесе шутланă.

1900 çултах „Искра“ хаçатăн малтанхи номĕрĕнче Ленин çырнă: „Пирĕн умра хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе тăшман крепăçĕ тăрать, унтан пирĕн çине йĕтресемпе пуљăсен пĕлĕчĕсем сирпĕнеççĕ, вĕсем чи лайăх борецсене илсе кайаççĕ. Пирĕн çак крепăçе илес пулать, пролетариатăн вăранакан пĕтĕм вăйне вырăс революционерĕсен пĕтĕм вăйĕпе пĕрле партине пĕрлештерес пулсан,—ун патне Роççийăра мĕнпур пек чĕрĕ те тÿрĕ вăйсем пурте туртăнĕç,—çав крепăçе епĕр илетпĕрех“ (т. IV, стр. 59).

Калама çук пысăк йăвăрлăхсене çĕнтерсе, Ленин Роççийăри социал-демократсене идейăпа организаци йĕнчен пĕрлештернĕ, çĕнĕ сăнарлă парти—социаљнăй революципе пролетариат диктатурин партийĕ тунă.

Рабочи класăн пĕрлĕхлĕ, централизацилĕ, марксисла революцилĕ партине тăвас задачăна ăвăçлăн пурнăçа кĕртес тесе, чăн малтан „економиссене“ çĕмĕрсе тăкмала пулнă. „Економиссем“ рабочисен йухăмне çара економикăлă кĕрешÿ çулĕ çине пăрса йарса ăна ансăрлатма тăрăшнă, вĕсем рабочи клас хушшине буржуалă, тред-йунионла политикăна илсе кĕртекенсем пулнă. „Пĕрлешиччен малтан,—тесе çырнă Ленин,—тата пĕрлешес тесен, малтан татăклăн та паллăн уйăрăлса тăни кирлĕ“ (т. IV, стр. 378).

„Что делать?“ кĕнекере Ленин „економиссен“ оппортунисăмĕн идейăлă никĕсĕсене уçса кăтартнă. „Економиссем“ рабочисен йухăмĕн стихийлăхĕ умĕнче пуç тайса тăнă. Çавăн пекех Ленин вĕсем рабочисен йухăмĕнче социалисăмла ăстăн рољне пĕчĕклетнине уçса кăтартнă.

Анчах та революцилĕ теорисĕр революцилĕ практикă пулма пултараймасть, — тесе вĕрентнĕ Ленин. Теорипе хĕçпăшалланман революцилĕ парти авангард пулма, халăха самодержави пусмăрлăхĕнчен, капиталисăм пусмăрлăхĕнчен хăтаракан идейăлă руководителĕ пулма пултараймасть. „Малта пыракан борецăн рољне малта тăракан теори тăрăх ĕçлекен парти кăна пурнăçа кĕртме пултарать“, — тесе паллă тунă Ленин (т. IV, стр. 380—381).

Роççийăри социал-демократишĕн теори уйрăмăнах пысăк вырăнта тăнă, мĕншĕн тесен ун чухне партин çеç пулса пынă тата рабочи класăн революцилĕ йухăмне организацилес çул çинче тăракан оппортунисăма çĕмĕрсе тăкмала пулнă.

Ленин „Что делать?“ кĕнекере рабочисен йухăмĕнче ăстăнлăхпа стихийлăх пĕр-пĕрин хушшинче мĕнле тăнине тарăнăн анализ тунă. Ленин çырнă: рабочи клас хăйĕн вăйĕпе тред-йунионла ăстăн, урăхла каласан, вак-тĕвек лайăхлатусемшĕн економикăлă кĕрешÿ тума кирлĕ шухăша кăна хатĕрлеме пултарать. Социалисăмлă идеологи стихийăлă йухăмран мар, наукăран пулса тăрать. „Класлă политикăлă ăстăна рабочи патне тулаш йенчен анчах, урăхла каласан, економикăлă кĕрешÿ тулашĕнчен, рабочисем хуçасем çине пăхакан сферă тулашĕнчен илсе пыма пулать“ (т. IV, стр. 422).

„Економиссем“ рабочисен йухăмĕн стихийлăхĕ умĕнче пуçтайса, унта социалисăмлă ăстăн кĕртме кирлине хирĕç пулса, рабочисене улталанă, рабочисен йухăмне буржуалă идеологи кĕртме çăмăллатнă, рабочисен йухăмне социалисăмпа пĕрлешме кансĕрленĕ.

„Ыйту çапла кăна тăрать: буржуалă йе социалисăмлă идеологи. Варри çук кунта... Çавăнпа та социалисăмлă идеологине кирек мĕнле пĕчĕке хуни те, унран кирек мĕнле пăрăнни те çавăнпа пĕрлех буржуалă идеологи вăйланнине пĕлтерет“ (Ленин, т. IV, стр. 391—392).

Ленинпа Сталин рабочисен йухăмĕнчи стихийлăха хирĕç хăйар кĕрешÿ пуçласа йанă.

„Епĕр, социал-демократсем. — тесе çырнă Сталин йулташ 1905 çулта, — рабочисен стихийлă йухăмне тред-йунионисла çулпа кайма чăрмантармала, ăна социал-демократла çыран хушшине кĕртсе йарас пулать, çак йухăма социал-демократла ăстăн кĕртес пулать тата рабочи класăн малта пыракан вăйĕсене централизацилĕ партине пĕтĕçтерес пулать“. („Вскользь о партийных разногласиях“).

Тепĕр статйара, 1905 çулта çырнăскерĕнчех — „Ответ Социал-Демократу“ статйара Сталин йулташ Ленин рабочисен йухăмĕнчи стихийлăхпа ăстанлăх çинчен каларса тăратнă положенисем патне тепĕр хут çавăрăнса пырать, рабочисен стихийлă йухăмне социалисăмлă ăстăн кĕртесси çинчен тата революцилĕ теорине рабочисен массăлă йухăмĕпе пĕрлештерме кирли çинчен Ленин каларса тăратнă тезиссене малала йарать.

Сталин статйине Ленин петех те ырланă. Партин тĕп оргăнĕнче, „Пролетарий“ хаçатăн 22-мĕш номĕрĕнче Ленин 1905 çулта çырнă: „Ответ „Социал-демократу“ статйара епĕр „ăстăна тулаш йенчен кĕртесси“ çинчен калакан паллă ыйтăва питĕ чаплăн лартнине паллă тăватпăр“.

„Економиссем“ рабочисен йухăмĕн стихийлăхĕ умĕнче пуçтайни марксисăма пăсни, „хвостисăм“, революцишĕн кĕрешекенсен пуçарулăхĕпе вăйне пĕчĕклетни пулать, тенĕ Ленин. „Марксисăм, пачах тепĕр майлă, социал-демократа чи пысăк малашлăх уçса, унăн аллине (çакăн пек калама йурать пулсан) кĕрешĕве „стихийлă“ çĕкленекен рабочи класăн мĕлйунĕсемпе мĕлйунĕсен хăватлă вăйĕсене парса пуçарулăхпа вăй валљи гигантла хускану парать!“ (Ленин, т. IV, стр. 398).

Рабочисен йухăмне социалисăмлă ăстăн кĕртес ыйту пролетариат кĕрешĕвне йертсе пырас ĕçре парти ролĕ мĕнле пулмали çинчен тăракан ыйтупа таччăн çыхăнса тăрать. Ленин: социал-демократи вăл рабочисен йухăмĕпе социалисăм пĕрлешни пулать те, тесе паллă тунă.

„Ленин çакна кăтартса панă: рабочисен йухăмĕн стихийлă процесне мухтани тата партин йертсе пырас рољне, ăна событисене çырса тăракан регистратăр ролĕ патне çитерсе тăратса, йышăнманни вăл—„хвостисăм“ шухăшне сарнине, партирен стихийлă процес хÿри, йухăмăн стихийлă процесĕ çине пăхса тăма çеç, самоток çине шанса тăма çеç пултаракан паççивлă вăй туса хурас шухăша сарнине пĕлтерет. Çакнашкал шухăша сарни вăл—ĕçе партине пĕтерес майлă туса пынине пĕлтерет, урăхла каласан, вăл рабочи класа партисĕр тăратса хăварассине, урăхла каласан, рабочи класа хĕçпăшалсăр тăратса хăварассине пĕлтерет. Анчах рабочи клас умĕнче çакнашкал

Выльӑх-чӗрлӗх работникӗсен республикӑри канашлӑвӗ

Декабӗрӗн 3—4-мӗшӗсенче, Шупашкарта, райçӗрӗç пай пуçлӑхӗсен заместительсен, аслӑ зоотехниксен, аслӑ выльӑх тухтӑрӗсен тата ял хуçалӑх специалисӗсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлу вчсӗ ыйту: ССР Союзӗн Çӗрӗç Халӑх Комиссариачӗ кашни уйрӑм районсенче мӗнле ӑратлӑ выльӑхсем пулмали çинчен хатӗрленӗ проект; выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмели государства планне тултарни тата выльӑхсене хӗл каçарма хатӗрлении; Пӗтӗм Союзри ял хуçалӑх выставкине хатӗрленесси çинчен сӳтсе явнӑ.

Декабӗрӗн 3-мӗшӗнчи каçхи ларура Чӑваш АССР Çӗрӗç Халӑх Комиссариачӗн выльӑх-чӗрлӗх управленин аслӑ зоотехникӗ П. Йолкин юлташ ССР Союзӗн Çӗрӗç Халӑх Комиссариачӗ кашни уйрӑм районсенче мӗнле ӑратлӑ выльӑх пулмали çинчен хатӗрленӗ проект пирки доклад туса пачӗ. Çӗрӗç органӗсенче ларнӑ халӑх тӑшманӗсем Чӑваш республикӗнчи колхозсене тӗрлӗрен ӑратлӑ выльӑхсем панипе выльӑхсем ӑрачӗсене пӑтраштарса янӑ. Вӗсем районсене, çавнашкалах колхозсене тӗрлӗрен ӑратлӑ выльӑхсем панипе выльӑх-чӗрлӗхсене ӑратлантарас ӗçе ч а р с а лартма шутланӑ. Çӗнӗ проект тӑрӑх çак çитменлӗхсем пулмаççӗ. Çӗнӗ проект тӑрӑх пирӗн республикӑри колхозсенче тата колхозниксен хуçалӑхӗсенче пӗр пек ӑратлӑ выльӑхсем пулаççӗ.

П. Йолкин юлташ доклачӗ тӑрӑх превире зоотехниксем тата ял хуçалӑх специалисӗсем халӑх тӑшманӗсем выльӑхсене ӑратлантарас ӗçре мӗнле чӑрмантарса пынине, çӗнӗ проекта колхозсенче анлӑн сӳтсе явни, колхозниксем мӗнле ӑратлӑ выльӑхсене килӗштерни çинчен тӗплӗн чарӑнса тӑчӗç.

Декабӗрӗн 4-мӗшӗнче канашлу выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмели государства планне тултарни тата выльӑхсене хӗл каçарма хатӗрлении, Пӗтӗм Союзри ял хуçалӑх выставкине хатӗрлемес ыйтусене сӳтсе явнӑ.

Ӗçсене вӑхӑтра туман пирки

МӐН-СӖНТЕР. Сивӗ кунсем пуçланчӗç. Çавӑнпа та выльӑхсене хӗл каçарма хатӗрленсе çитесси, туса çитермен ӗçсене туса çитересси ответлӑ задачӑ пулса тӑрать. Çӗнӗрен тума пуçланӑ витесене çак кунсенчех туса пӗтермеле, юсавсӑррине юсамала. Выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каçарма çителӗклӗ таран апат-çимӗç уйӑрса хумала. Çаксем пурте социализмлӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмели плана пурнӑçа кӗртес ӗçре тӗп вырӑн йышӑнса тӑраççӗ.

Анчах, Тутаркас районӗнче хӗллене пит начар хатӗрленнӗ. Райçӗрӗç пайӗнче ӗçлекенсем ку тӗлӗшпе тин çаврӑнкалама тытӑннӑ. Аслӑ зоотехник Кожаков й. колхозсем хӗллене мӗнле хатӗрленни çинчен тӗплӗн каласа пама та пултараймарӗ. Çакӑнтан ӗнтӗ райçӗрӗç пайӗ хӗллене хатӗрленессипе нимӗн те туманнине лайӑх курӑнать.

Çӗрӗç пайӗнчи работниксем тимсӗр ӗçленине пула хӑшпӗр колхозсем хӗллене çителӗклӗ хатӗрленмен, выльӑх апачӗ хатӗрлемен, витесене юсаман. Турайри „Урожай" колхозра 12 гектар çинче комбайнпа çапнӑ ыраш уламне вӑхӑтра пухса лартманнипе çӗртсе янӑ.

Юнкӑри „Çӗнӗ Юнкӑ" колхоз правленийӗ (председателӗ Шутеев) сысна ферми çине çаврӑнса та пӑхмасть. Сысна витине халӗ те туса çитермен. Выçӑлкӑри „1-мӗш Май" колхозра та çавнашкалах. Ӗнесене хупма вите тӑвӑр.

Çавӑн пекех Шатракассинчи „Идея" колхозра ӗне витине виçӗ çул хушши тӑваççӗ, халӗ те туса пӗтереймеççӗ. „Красное знамя" колхозра ферма валли вите тума производствӑлла планра кашни çул палӑртаççӗ, анчах планра пӑхнипех ирттерсе яраççӗ. Шомик ялсоветӗнчи „Волга" колхоз та лаша витине тума пуçӑнни икӗ çул çитет, анчах кӑçал та туса пӗтереймеççӗ. Çавӑн пекех ку колхозра сурӑх ферми пур, анчах витийӗ çук. Виçӗ çул ӗнтӗ сурӑх вити тӑвасси çинчен калаççӗ, анчах тумаççӗ. Сурӑхсем пӗр колхозникӑн пӗчӗк, тӑвӑр сарайӗнче пурӑнаççӗ."

Хӑшпӗр колхозсенче тата витесене юсас ӗçе пуçӑннӑ пулсан та, тӑсса пыраççӗ, ӗçе хӑвӑртлатмаççӗ.

П. Яркуньков.

Трактӑр ӗçне массӑлӑн вӗренес йухӑм

ШӐХАСАН. Çак кунсенче машина-тракторлӑ станци çӗнӗрен тракторисчем хатӗрлекен курс уçрӗ. Курсра 50 колхозник вӗренет. МТС çумӗнче тракторисчен курсӗ уçӑлассине пӗлсенех колхоз çамрӑкӗсем трактӑр ӗçне вӗренме кӗме 250 çын заявлени панӑ пулнӑ. Трактӑр ӗçне массӑлӑн вӗренес йухӑм çамрӑксем хушшинче халиччен пек мар ӳснӗ. МТСтанцийӗ 1939 çулти январь уйӑхӗнче „ЧТЗ" тата „НАТИ" тракторсем çинче ӗçлекен тракторисчесене 25 çынна пысӑкрах пӗлӳ парас йӗнӗпе тепӗр курс организацилет, унта чи лайӑх тракторисчесене илеççӗ.

В. Ч.

ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗп Комитетӗнче

Колхозсенчи укçалӑ доходсене валеçесси çинчен

Вырӑнти органсемпе колхозсем ыйтнӑ май, ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ 1938 çулти апрелӗн 19-мӗшӗнче ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗпкомӗн постановленине улӑштарас майпа çапла йышӑннӑ:

Ял хуçалӑх ертелӗн Примерлӑ Уставӗн 12-мӗш статйине айалта кӑтартнӑ пек çирӗплетес:

„12. Ертел илнӗ укçалӑ доходсенчен:

а) саккун тӑрӑх чи малтан государствӑна памали налогсене парса татать, страховкӑ укçисене тӳлет тата укçан илнӗ ссудӑсене каялла таварса парать;

б) производствӑн кулленхи ӗçӗсене тума: ял хуçалӑх хатӗрӗсене юсама, выльӑх-чӗрлӗхе сыватма, хурт-кӑпшанкӑсемпе кӗрешме т. ыт. те кирлӗ расхутсене туса пырать;

в) ертелӗн администрацине хуçалӑх расхучӗсене саплать, çав ӗç валли укçалӑ доходсенчен 2 процентран ытла мар уйӑрать;

г) культурӑлӑ ӗçсем тума: колхоз кадрӗсене хатӗрлеме, яслӗсем, ачасен площадкисем организацилеме, радио лартма т. ыт. валли те укçа-тенкӗне уйӑрса хурать;

д) ял хуçалӑх хатӗрӗсем тата выльӑх-чӗрлӗх туянма çурт-йӗр тумалли япаласем илме, çуртйӗрсене тума ютран тара тытнӑ рабочисене тӳлеме ертелӗн уйӑрӑлми фондне тултарса пырать.

Уйӑрӑлми фонд укçи пайне тултарма тӗштырлӑ районсенче ертелӗн укçа-тенкӗ тупӑшӗнчен 12 процентран кая мар, анчах 15 процентран ытла мар, техникӑлла культурӑсем акса тӑвакан тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекен районсенче 15 процентран кая мар, анчах 20 процентран мала мар уйӑрса пырать;

е) ертелӗн укçалӑ доходсенчен юлнӑ пӗтӗм укçа-тенкӗне ертел членӗсем хушшинче ӗçкунӗсем тӑрӑх валеçет.

Ертеле пыракан пур доходсене те, вӗсем пынӑ кунран кая юлмасӑр ертелӗн прихочӗ çине обязательнӑ çырса хурать.

Ертеле пыракан доходсем йенӗпе те, çавнашкалах тата расхутсем тӑвакан укçа-тенкӗпе те ертел правленийӗ çулталӑклӑх сметӑ тӑвать, çав сметӑ ертел членӗсен аслӑ пухӑвӗ çирӗплетнӗ хыççӑн кӑна ӗçе кӗрет.

Правлени укçа-тенкӗ расхучӗсене сметӑ статйисенче палӑртса хунӑ тӑрӑх анчах туса пырать,— расхут тумалли сметӑн укçа-тенкисене правлени хӑй тӗллӗн пӗр статйаран тепӗр статйана куçарма пултараймасть, укçа-тенке пӗр статйаран тепӗр статйана куçарас тесен, правленин ертел пухӑвӗнчен ыйтмала.

Колхозниксен пухӑвӗ колхозӑн производствӑн кулленхи ӗçӗсене тума çирӗплетнӗ çулталӑклӑх сметинчен правлени тӗштырӑсем мӗнле пулнине тӗплӗн палӑртиччен расхутсен сметинче кӑтартнӑ тӑрӑх 70 процентран мала мар расхутлама пултарать. Юлашки 30 проценчӗ резервӑра юлать, вӗсене тӗштырӑ мӗн чухлӗ пулнине тӗпренех палӑртнӑ хыççӑн тата колхозниксен пухӑвӗ татса панӑ хыççӑн кӑна расхутлама юрать.

Ертел хӑйӗн ахаль выртакан укçи-тенкисене хӑйӗн счочӗ çинче банкӑра йе перекет кассинче усрать. Счот çинчи укçана ертел правлени приказӗ тӑрӑх çеç кӑларса пама пултараççӗ. Вӑл приказ ертел правлени председателӗпе счетовочӗ алӑ пуссан анчах тӗрӗс шутланать".

Пӗр-ик сӑмах пусуçаврӑнӑшӗ çинчен

Пирӗн Максим Горький ячӗпе тӑракан колхоз (Сӗнтӗрвӑрри р.) иртнӗ çулчченех 5 уйлӑ пусуçаврӑнӑшӗпе пурӑннӑ. Çакнашкал пусуçаврӑнӑшӗпе тырпулсем четретлеясе акӑнса пыма пултараймам. Çулсеренех тулӑ çине тулӑ, сӗлӗ çине сӗлӗ акӑнса пынӑ. Выльӑхсем валли апат питӗ сахал пулнӑ. Çапла вара çӗрӗç органӗсенче ларнӑ халӑх тӑшманӗсем пусуçаврӑнӑшӗсене юрийех пӑтраштарса пынӑ.

Иртнӗ çулта епӗр 7 уйлӑ пусуçаврӑнӑшӗ çине куçрӑмӑр. Анчах, 7 уйлӑ пусуçаврӑнӑшӗ çине епӗр ялтах куçса çитнӗ теме пултараймастпӑр-ха. Унӑн таблици мӗн пурӗ те 5 çул хушши, йе 1937 çултан пуçласа 1941 çула çитиччен ӗçлеме çеç çитет. Çапла вара 7 уйлӑ пусуçаврӑнӑшӗ тӗрӗс пусуçаврӑнӑшӗ пулма пултараймасть. Мӗншӗн тесен 1942—43-мӗш çулсенче хӑш уйра мӗнле тырӑ акасси пирӗншӗн паллӑ мар. Ытти колхозсенче те çакнашкал йӗркесемех.

Пӗр-ик сӑмах çӗр акти çинчен. Вӑл акта епӗр 1936 çулта илтӗмӗр. Анчах çӗр акти çинче пысӑк çитменлӗхсем пур. Вӑл акт тӑрӑх, пирӗн колхозра акмали çӗр лаптӑкӗ, выльӑхсене çӳретмели çӗр вырӑнӗ, çаран, вӑрман мӗн чухлӗ пулнине пӗлме çук. Çавнашкалах хӑш йенче йединоличниксен, хӑш йенче колхозсен çӗрӗсем пулни те паллӑ мар. Пирӗн колхозӑн çулмалли çаран 10.2 гектар анчах. Апла пулсан та государствӑна ута пама 18 гектар шутласа договӑр тутарттараççӗ.

Çӗр актине илнӗ хыççӑн пирӗн 11 хуçалӑх колхоза кӗчӗç. Çав йединоличниксен çӗрӗсене ку вӑхӑтченех çӗр акти çине кӗртмен. Иртнӗ çулта пирӗн колхоз çумне 12 гектар çурӑ вӑрман çирӗплетсе пачӗç. Çак лаптӑка та пайанхи кунччченех акт çине кӗртмен.

Епӗр Сӗнтӗрвӑрри райçӗрӗç пайӗнчен колхозсене тӗрӗс пусуçаврӑнӑшӗсен таблицисене туса парасса, çӗр актисенчи çитменлӗхсене тӳрлетессе кӗтетпӗр.

Бригадир—П. Комиссаров.

Сталинла Конституци кунне уйавлани

Пӗтӗм халӑх праçникӗ

Сталинла Конституци икӗ çул тултарнӑ куна Совет Союзӗнчи ӗççыннисем чаплӑн та хаваслӑн уйавларӗç. Праçник кунӗнче—декабӗрӗн 5-мӗшӗнче — Мускаври вунӑшар пин ӗççыннисем илемлетнӗ урамсемпе площӗтсене тухнӑ.

Совет халӑхӗн аслӑ çӗнтерӗвӗсене, вӑл çӗнтерӳсене тума хавхалантарса пыракана, вӗсен организаторне, тӗнчери чи демократиллӗ Конституцийе тӑвакана—Сталин юлташа мухтакан праçник лозунгӗсене радиорепродукторсем янратса тӑчӗç. Кӗрлеççӗ оркестрсем, янӑраççӗ телейлӗ, хаваслӑ сасӑсем...

Столицӑри анлӑ та ирӗк площӗтсем çинче — естрадӑсем, радиопередвижкӑсем, духовой оркестрсемлӗ грузовиксем. Пиншер саслӑ хор совет композиторӗсен чи лайӑх юррисене юрлать.

Каçхине хула çийӗнче прожекторсен кӑвак çутӑ пайракисем ялкӑшма пуçлаççӗ. Çуталса кайаççӗ тӗрлӗ тӗслӗ çутӑсем. Уйавлӑ столицӑ çӗрлеччченех хаваслӑнса савӑнать.

Сталин ячӗпе тӑракан автосавӑтӑн Культурӑ дворецӗнче ССРС Конституци Кунӗ ячӗпе питӗ пысӑк вечӗр-бал пулса иртнӗ. Дворецӑн илемлетсе пӗтернӗ ирӗк залӗсене пилӗк пин çынна яхӑн пухӑннӑ. Автосавӑтри рабочисен, служащисен тата инженерсен уйавӗнче Казахстан халӑх юрӑçӗ Джамбул Джабайев пулнӑ.

Ленинградри культурӑ çурчӗсемпе клубсенче пӗтӗм халӑх праçникӗ ячӗпе вечӗрсем пулса иртнӗ. Праçник ячӗпе организациленӗ бал карнавалсенче, гуляннисенче пиншер çын пулнӑ. Кировски тата Ленински районсенчи ӗççыннисен праçникри балӗнче 6.500 хӑна пулнӑ.

Совет Украинин столицинче — Киевра, праçник иллюминацийӗсем çуталса кайсанах, пит те пысӑк халӑх гуляннинче пиншер çын тухнӑ. Çуртсен балконӗсем çинче оркестрсем вырнаçса тӑнӑ. Чи лайӑх затейниксем, организаторсем ташӑсемпе вӑйӑсем организациленӗ. Украинӑри физкультурӑпа спорт дворецӗнче физкультурӑ праçникӗ пулса иртнӗ.

Декабӗрӗн 5-мӗшӗнче Минскра Сталинла Конституци Кунӗ ячӗпе хула совечӗн хулари парторганизацисемпе тата общӗствӑлла организацисемпе пӗрлехи чаплӑ пленумӗ пулса иртнӗ. Пленумра пулнисем аслӑ Конституцине тӑвакан, халӑхсен çулпуçӗ юратнӑ Сталин патне салам яма йышӑннӑ.

Ростов облаçӗнчи хуласемпе станицӑсенче Сталинла Конституци икӗ çул тултарнӑ йатпа чаплӑ митингсем пулса иртнӗ. Николайевскайа станицинче митинга пин çын ытла пухӑннӑ. Праçнике районри чи лайӑх çынсем пухӑннӑ. Митингсем хыççӑн юланутçӑсен ӑмӑртӑвӗ, гранатӑ ывӑтакансемпе тӗл перекенсен ӑмӑртӑвӗ пулса иртнӗ. Ӑмӑртусене çамрӑксем пит активлӑн хутшӑннӑ. Правур та маттур пулас тӗлӗшрен, тӗл перес тӗлӗшрен казачкӑсем казаксенчен пӗрре те кайра тӑман.

Пӗтӗм халӑх уйавӗ çинчен, массӑлӑ митингсем, праçникри гуляннисем пулни çинчен Ташкентран, Алма-Атаран, Тбилисирен, Бакуран, Йереванран тата ытти нумай хуласенчен, çавӑн пекех тата вӗçӗ-хӗррисӗр аслӑ Совет Союзӗнчи колхозлӑ ялсенчен те пӗлтереççӗ.

Митингсенче каланӑ сӑмахсенче, хӑйӗн хаваслӑ юррисенче совет халӑхӗ юратнӑ тӑван çӗршывне, тӗнчери чи демократиллӗ Конституцине тунӑ генийе, аслӑ Сталина мухтаса чысларӗ.

(ТАСС).

Шупашкар хулинчи ӗççыннисен митингӗ

Аслӑ Сталин çӗнтерӳсен ялавӗ, Совет халӑхӗн пурнӑçӗ тата унӑн малашлӑхӗ. Кашни колоннӑ пуçӗнче ССР Союзӗн Конституцине туса паракана, пӗтӗм тӗнчери пролетариат çулпуçӗн аслӑ та аслӑ Сталинӑн сӑнне çӳле тытса пыраççӗ. Тӗнчери чи хаклӑ, чи паллӑ çыннӑн сӑнӗ Сталинла Конституци совет гражданӗсене панӑ аслӑ правасемпе ирӗклӗхсем çинчен калакан лозунгсемпе хӗрлӗ ялавсем çинче татах та уççӑнрах, татах та çывӑхраххӑн курӑнать. Партипе правительствӑ руководителӗсен портречӗсене, хӗрлӗ ялавсемпе çӗнтерӳ лозунгӗсене йӑтнӑ колоннӑсем вӗçӗ-хӗррисӗр Хӗрлӗ площӗтеле пыраççӗ. Кашни çыннӑн чӗри пысӑк хаваспа тулнӑ. Вӗсенчен кашнийӗх ирӗклӗ совет çӗршывӗн гражданинӗ пулса тӑнипе çӗклевсе савӑнать.

Хӗрлӗ площӗт çынсемпе тулса ларчӗ. Партин хула комитет секретарӗ Лапин юлташ Сталинла Конституцине йышӑнни икӗ çул тултарнӑ йатпа пухӑннӑ хулари митинга уçать. ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе правительствӑ ячӗпе ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗн секретарӗ Волков юлташ саламларӗ. Вӑл хӑйӗн малтанхи сӑмахӗнче Сталинла Конституцине тӑвакан аслӑ Сталин çинчен, пирӗн çӗршыв Ленин — Сталин партийӗ йертсе пынипе тунӑ пысӑк çӗнтерӳсем çинчен каларӗ. Сталинла Конституци — Октйаберти Социализмлӑ Аслӑ революци çӗнтерӗвӗн итогӗ. Сталинла Конституци совет халӑхӗн малашлӑхӗ, вӑл çӗнӗ çӗнтерӳсем тума хавхалантарать. Волков юлташ Сталинла Конституцине тӑвакан, пӗтӗм ӗççыннисем чӗререн юратса тӑракан çыннӑн — аслӑ Сталин йатне асӑннӑ хыççӑн пӗтӗм площӗт алӑ çупнипе кӗрлесе тӑрать. Пур çӗртен те аслӑ çулпуçне саламланӑ, „урра" кӑшкӑрнӑ сасӑсем илтӗнеççӗ.

Унтан вӑл фашисла çӗршывсенчи ӗççыннисен тӗксӗм, тискер, выçлӑхлӑ, нушалӑ пурнӑçӗ çинчен чарӑнса тӑчӗ, капитализмлӑ çӗршывсенчи рабочи класӑн паттӑр кӗрешӗвӗ çинчен каласа пачӗ. Волков юлташ Совет Союзӗ капитализмлӑ йӗритавралӑхра пурӑнни çинчен асӑрхаттарса, хамӑрӑн политикӑлӑ сыхлӑха ӳстерме, оборонӑ хӑватне вӑйлатма чӗнчӗ.

Шупашкар хулинчи рабочисен ячӗпе Афанасьев юлташ саламларӗ. Ун хыççӑн трибунӑ çине артист Мудров юлташ тухать. Вӑл хулари интеллигенци ячӗпе саламласа çапла каларӗ:

— Тӑшман пирӗн тӑван çӗршыв çине килсе тапӑнас-мӗн пулсан, совет интеллигенцийӗ, пӗтӗм халӑхпа пӗрле, алла пӑшал тытса совет халӑхӗн ирӗклӗхӗпе тивӗçлӗхне — Сталинла Конституцине сыхласа хӑварма яланах хатӗр тӑрать.

Митинг хупӑнчӗ. Площӗтӗн пур йенчен те Сталин юлташа, коммунисен партипе совет правительствине саламланӑ сасӑсем илтӗнеççӗ. Пӗтӗм халӑх хӑйӗн çулпуçне тав тӑвать, ӑна чӗререн юратса саламлать.

Митинг хыççӑн демонстраци пулса иртрӗ. Тӑван çӗршывӑн вӑйӗпе хӑвачӗ, совет гражданӗсен демократиллӗ прависемпе ирӗклӗхӗсем, коммунисен партине, Сталин юлташа юратса тав туни çинчен калакан лозунгсемпе плакатсем, хӗрлӗ ялавсем тата партипе правительствӑ руководителӗсен портречӗсене çӗклесе пыракан колоннӑсем трибунӑ умӗнчен нумайччен иртсе пычӗç.

Çак кун пӗтӗм совет халӑхӗ хӑйӗн телейлӗ те савӑнӑçлӑ пурнӑçӗшӗн коммунисен партине тата унӑн çулпуçне Сталин юлташа чӗререн юратнине демонстрацилесе пачӗ. Сталинла Конституцине тӑшмансенчен сыхласа хӑварма яланах хатӗр тӑни çинчен тата тепӗр хут хайаррӑн асӑрхаттарчӗ. Совет халӑхӗ Ленин—Сталин партийӗ тавра, Сталин юлташ тавра татах та таччӑнрах пӗтӗçсе коммунизмлӑ общӗстви тӑвассишӗн пӗтӗм вайпа кӗрешме пулчӗ.

Сталинла Конституцине йышӑнни икӗ çул тултарнӑ йатпа хулари предприятисенче, учреждениссенче, шкулсенче чаплӑ пухусем туса ирттерчӗç. Вӑл пухусенче Сталинла Конституци çинчен докладсем итлерӗç. Рабочисемпе служащисем тата студентсем художествӑлла пултарулӑх вечӗрӗсенче хӑйсен творчӗствине кӑтартса пачӗç. Уйава пӗтӗм халӑх çав тери пысӑк савӑнӑçпа ирттерчӗ.

Вечӗр пулса иртрӗ

Сталинла Конституцине йышӑнни икӗ çул тултарнӑ кун, каçхине, Шупашкарти Коммуналла-строительсен техникумӗнче чаплӑ вечӗр пулса иртрӗ. Пухура Сталинла Конституци çинчен доклад итлерӗç.

Доклад хыççӑн Ижевскри Коммуналла-строительсен техникумӗпе социализмлӑ ӑмӑрту договӑрне йышӑнтӑмӑр. Ун хыççӑн студентсем Трахтенбергӑн „Знатный внук" ятлӑ пйесине выляса пачӗç. Чылай студентсем сӑвӑсем тухса каларӗç, юрӑсем юрласа пачӗç.

В. Данилов.

тӑшмансем — кӗрешӗвӗн мӗнпур хатӗрӗсемпе хӗçпӑшалланнӑ патша влаçӗ пек тата хальхи вӑхӑтри майсемпе организацилеинӗ, рабочи класа хирӗç кӗрешессине йертсе пыракан партилӗ буржуази пек тӑшмансем тӑнӑ чухне, рабочи класа хӗçпӑшалсӑр тӑратса хӑварни вӑл —рабочи класа сутнине пӗлтерет" („ПСК(б)П Историйӗ", стр. 36).

„Економисӑмӑн" буржуалӑ тымарӗсене уçса кӑтартса, Владимир Ильич „економиссем", бернштейнианецсем пекех, социал-демократи программинчен, марксизмӑн тӗп принципӗсенчен — революцирен, пролетариат диктатуринчен, социализмран пӑрӑннине кӑтартса панӑ. Оппортунисемшӗн рабочи класа капитализмран хӑтаракан социальнӑй революци партийӗ мар, капитализм пуçпулса тӑрассине çаплипех хӑваракан „социальнӑй реформӑсен" партийӗ кирлӗ пулнӑ.

Ленин „економиссен" çакнашкал вӑрттӑн шухӑшӗсенчен тӗпренчӗкне те хӑварман. „Економизм" бернштейнианствӑн пӗр пайӗ пулнӑ, çавӑнпа та Ленин çырнӑ „Что делать?" кӗнеке пӗтӗм тӗнчери оппортунизма та çӗмӗрсе тӑкмалах çапни пулнӑ. Пӗр çак йенчен илсен те ӗнтӗ „Что делать?" кӗнекен пӗтӗм тӗнчери пӗлтерӗшӗ питӗ пысӑк.

* * *

„Что делать?" кӗнеке „економизма" тӑрӑ шыв çине кӑларса çӗмӗрсе тӑкнӑ çеç мар, вӑл тата рабочи класӑн революцилӗ партине тӑвасси мӗнле çулпа пымалине те кӑтартса панӑ. Кӗнекен юлашки икӗ сыпӑкӗ Ленинӑн организацилӗ планӗ çинчен калать.

Патша Российӗн условийӗсенче Ленин партин никӗсӗ тесе профессионал-революционерсен организацине шутланӑ. Политикӑлӑ полицийе —патша йӗркипе кӗрешмеле пулни парти работникӗсенчен уйрӑм пахалӑх ыйтнӑ, профессилӗ революционерсем кирлӗ пулнӑ. Ленин çырнӑ: „Пӗр революцилӗ юхӑм та руководителӗсен тӗреклӗ, ӗççене сыпӑнтарса пырассине сыхласа усракан организацийӗсӗр çирӗп пулма пултараймасть" (т. IV, стр. 456).

Российӑри самодержави условийӗсенче Ленин революционерсен организацинче çирӗп конспирацие централизаци тума вӗрентнӗ. Парти чӑтӑмлӑ пулмала, вӑл массӑпа таччӑн çыхӑнса тӑмала.

Çакӑн пек партине сапаланчӑк, пӗр пӗринчен уйрӑм тӑракан кружоксенчен пуçтарса организацилемеле, малта тӑракан теорипе хӗçпӑшаллантармала пулнӑ. Партине организацилемели, пуçтармали, революцилӗ социал-демократла вӑйсене воспитани памали хатӗр тесе Ленин пӗтӗм вырӑс социал-демократсен хаçачӗ пулать, тесе шутланӑ. Хаçат—коллективлӑ организатӑр. Ленин каланӑ: „Пӗтӗм вырӑс хаçачӗсӗр пуçне политикӑлӑ вӑйлӑ организацисене ВОСПИТАНИ ПАМА урӑх хатӗр çук" (т. IV, стр. 485).

Ленин идейи гениле тӗрӗс пулнӑ. Ленин хаçачӗ „Искра" пирӗн партине—çӗнтерӳлӗ социализмла революци партине организацилеме пулӑшрӗ.

„Парӑр пире революционерсен организацине—вара епӗр Российӑна тепӗр майлӑ çаврӑрса лартатпӑр!" тесе çырнӑ Ленин пророкла (т. IV, стр. 458). Çакӑн пек организацине—большевиксен аслӑ партине—пӑхса ӳстерчӗ те ӗнтӗ социализмлӑ революцин çулпуçӗ тата ашшӗ Владимир Ильич Ленин. Ленинӑн-Сталинӑн большевикла партийӗ кивӗ Российӑна тепӗр майлӑ çаврӑрса лартрӗ, социализмӑн пӗтӗм тӗнчипе историлӗ çӗнтерӗвӗсене турӗ.

* * *

„ПСК(б)П Историйӗн Кӗске курсне" вӗреннӗ чухне юлташсене „Что делать?" кӗнекене тӗплӗн вуласа тухма сӗнетпӗр. Çак кӗнеке мӗн пек пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулни уйрӑмӑвах ӑна вулаччен малтан Ленин çырнӑ „С чего начать?" статйана (т. IV, стр. 107—113) вуласа тухнинчен тата та паллӑрах пулса тӑрать. Çак статйара кӗскен те анланмала „Что делать?" кӗнекере аслӑлатса çырнӑ шухӑшсем çинчен каланӑ.

„Что делать?" кӗнеке Российӑри социал-демократи массине питӗ пысӑккӑн хавхалантарнӑ. Вӑл кӗнекене оппортунисем, рабочисен юхӑмне сутакансем выç кашкӑрсем пек уласа кӗтсе илнӗ пулсан, революцилӗ борецсем питӗ пысӑк хаваслӑхпа йышӑнса илнӗ. Партин Мускав комитечӗпе Петербург комитечӗ „Что делать?" кӗнекешӗн Ленина тав туса çыру йама йышӑннӑ.

1902 çулти августӑн 24-мӗшӗнче Ленин Мускав комитечӗ тав тунине ответ парса çапла çырнӑ: „Хам йенчен епӗ мӗнпа пӗр кӑмӑллӑ, пӗр шухӑшлӑ пулнӑшӑн Сире хӗрӳллӗн тав тӑвап. Пытанса пурӑнакан писательшӗн çакӑ вӑл пушшех те паха, мӗншӗн тесен унӑн яланхи пек мар условисемче вулакантан инçетре ӗçлеме тивет". Малала тата: „Что делать?" кӗнекешӗн есӗр тав тунине епӗр çак кӗнекере есӗр хӑварӑн ыйтусем çине ответ тупнӑ пек, есӗр хӑвӑр юхӑмпа тӳррех паллашнинчен çак кӗнекере çырса кӑтартнӑ пӗр хаçат центрӗ тавра ытларах хайулӑ, ытларах пысӑк, ытларах пӗрлешӳлӗ, ытларах централизацилӗ, ытларах пӗтӗçӳлӗ ӗç кирлине туйса илнӗ пек ӑнлантӑмӑр, паллах çакӑн пек кӑна ӑнланмала пулнӑ та".

„Мускав комитетне янӑ çырӑва" Ленин сочиненисен пилӗккӗмӗш томӗнче (стр. 167—178) пичетлесе кӑларнӑ. Ку çырусӑр пуçне тата Ленин çырса кӑларнӑ „За 12 лет" сборник умсӑмахне вуласа тухса вӗренни кирлӗ. Ку сборнике 1908 çулта кӑларнӑ. Унта Ленин хӑй 1895 çултан пуçласа 1905 çула çитиччен çырнӑ статйасене, брошӳрӑсене кӗртнӗ, вӑл шутра „Что делать?" кӗнеке те пур. Сборник умсӑмахӗнче (ӑна сочиненисен XII-мӗш томне кӗртнӗ, стр. 57—70) Ленин „Что делать?" кӗнекене, „Искра" тактикин, „Искран" 1901 тата 1902 çулсенчи организацилӗ политикин сводки пек кӗскен хак парса тухать.

Кайала çаврӑнса пӑхса, Ленин мӑнкӑмӑллӑ пулса „анине акнӑ, тырри пулса çитнӗ, вырса пӗтерне" тесе паллӑ тунӑ. Чӑнахах та, Ленинпа Сталин нумай çулсем хушши геройла ӗçлесе рабочи класӑн чаплӑ, революцилӗ паттӑр партине тунӑ! „Профессионаллӑ революционер вырӑссен пролетарилӗ социализм историнче хӑйӗн ӗçне турӗ. Халӗ ӗнтӗ çак ӗçе нимӗнле вӑйсем те çӗмӗреймӗç",— тесе çырнӑ Ленин (т. XII, çтр. 63).

Чӑнахах та, ленинла-сталинла аслӑ ӗçе нимӗнле вӑйсем те çӗмӗреймӗç, вӑл ӗç ӑнаçлӑ пулассинче Ленин çырнӑ „Что делать?" кӗнеке пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ.

А. Абрамов.

Германи рейхстагне çĕнĕрен хушса „суйлани“

Декабĕрĕн 4-мĕшĕнче Германи рейхстагне çĕнĕрен хушса „суйлавсем“ пулса иртнĕ. Ку суйлавсем Мÿнхĕнри килĕшÿ хыççăн Германи çумне хутшăннă районсенче пулнă.

Суйлавсем пуçланас умĕн Германи фашисĕсем çак районсенчи халăха „суйлава хатĕрлес“ тĕллĕшпе тума кирлисене пурне те тунă. Нойабĕрĕн 30-мĕшĕнче Ходовски район йалĕсенче (кунта пуринчен ытла чехсем пурăнаççĕ) халăха тÿлевсĕр апат панă. Пĕр йалта (унта икĕ пин ытла халăх пурăнаť) тÿлевсĕр апат илме пурĕ те 4 çын кăна пынă, тепĕр йалĕнче — 1 çын. Германи влаçĕсем çак апат илме пынă пĕртен-пĕр çынна та йеврей пулнине пĕлсен, ăна арĕслесе концентрациллĕ лагĕре йанă.

Декабĕрĕн 1-мĕшĕнче çав Ходовски районĕнчех тепĕр йала фашисла агитатăрсен ушкăнĕ пынă. Анчах халăх митинга тухман. Тепĕр кунне фашисла карма-çăварсен тепĕр ушкăнĕ пырса çитнĕ. Анчах, каллех, малтанхи кунхи пекех, митинга хресченсенчен никам та тухман.

Германи фашисĕсем старăстăна декабĕрĕн 3-мĕшĕнче пулас митинг хыççăн прени уçма шантарса сăмах панă. Вара митинга пĕтĕм халăх тухнă. Германи офицерĕ чехсен чĕлхипе сăмах калană хыççăн, трибунă çине йал хресченĕ тухнă. Вăл Германи Чехословаки территорине уйрăмăн илсен — Ходовски района туртса илнине хирĕçлесе питĕ хĕрÿлĕн калană. Хресчен офицера çакăн пек ыйту панă. „Калăр-ха есĕр, епĕр Баварин пĕр пайне туртса илес те, сире захватчиксемшĕн сасăлама сĕнес, — мĕн тунă пулăттăр есĕр ун чухне?“ Офицер нимĕн тума аптрасан: „Епĕ, нимĕç çынни, паллах захватчиксене хирĕç сасăланă пулăттăм“, тенĕ. Хресчен ăна хирĕç таврăнса вара çапла калană: „Епĕр те есĕр тунă пекех тăвăпăр, захватчиксене хирĕç сасăлăпăр“. Хресченсем хăйсен ораторне çавăншăн питĕ мухтанă. Пуху декабĕрĕн 4-мĕшĕнче Гитлĕра хирĕç сасăлама пулса резолюци йышăннă. Анчах ку пĕре те Германи фашисĕсене: Гитлĕр—Генлейн спискине хирĕç Ходовски районра пурĕ те пĕр çын çеç сасăланă тесе пĕлтерме кансĕрлемен.

(ТАСС).

Ленинградра С. М. Кирăв памĕтникне уçнă

Декабĕрĕн 6-мĕшĕнче Ленин кулинче, Кирăв районĕнчи тĕп плошчĕтре революцин çулăмлă трибунне, асран кайми Сергей Миронăвич Кирăва чысласа лартнă памĕтнике уçнă.

Хĕрлĕ йалавсемпе, партипе правительствă руководителĕсен портречĕсемпе илемлетнĕ плошчĕте Ленинградри пиншер ĕççыннисем пухăннă.

Памĕтнике уçнă çĕрте ПСК(б)П Тĕпкомĕн тата Ленинград Обкомĕпе хула комитечĕн çекретарĕ А. А. Жданăв йулташ, парторганизацисемпе совет организацисен представителĕсем пулнă.

Памĕтнике çакăн пек тунă: Сергей Миронăвич кĕлетки пĕтĕм пĕвĕпе малала тапранса кайас пек тăраť. Унăн плашчĕн аркине çил вĕлкĕштерет. Сылтăм аллине сулса çĕкленипе, вăл ĕççыннисене Октаберти Социалисăмлă Аслă революцин çĕнтерĕвĕсем çине, мухтавлă Ленин хулинчи ĕççыннисем тунă аслă та пысăк çĕнтерÿсем çине кăтартса тăнă пек туйăнаť.

Памĕтник пйедесталĕ çине С. М. Кирăвăн çак сăмахĕсене çырса хунă:

„Йулташсем, нумай ĕмĕрсем кайарах аслă математик çĕр чăмăрне тепĕр май çаврăса йамашкăн тĕренмели пăнчă шыраса тупма ĕмĕтленнĕ. Иртрĕç ĕмĕрсем, çак тĕренмели пăнчăна тупнă çеç мар, ăна епĕр хамăр аласемпе тунă. Нумай çулсемех те иртмĕç, епĕр сирĕнпе, пирĕн совет çĕршывĕнчи социалисăм çĕнтерсе илнисем çине тĕренсе, çĕр чăмăрĕн икĕ полушарине те коммунисăм çулĕ çине çаврăса йарăпăр“.

Памĕтнике уçнă чух митинг пулса иртнĕ.

(ТАСС).

Сталинла Конституци кунне районсенче уйавлани

Патăрйелĕнче

Декабĕрĕн 4-мĕшĕнче район центрĕнчи учреждениcемпе шкулсенче тата колхозсенче Сталинла Конституци кунĕ йачĕпе чаплă пухусем пулса иртнĕ.

Декабĕрĕн 5-мĕшĕнче район центрĕнчи ĕççыннисен митингĕ пулса иртнĕ. Митингра пин çын ытла пулнă. Каçхине чаплă лару хыççăн кино кăтартнă, савăнăçлă вечăр пулнă.

Сĕнтĕрвăрринче

Сталинла Конституци икĕ çул тултарнă йатпа декабĕрĕн 5-мĕшĕнче пысăк митинг пулса иртнĕ. Митинга икĕ пин çын пухăннă.

Каçхине хулари театрта чаплă лару пулса иртнĕ. Ларура парти кабинетĕнче ĕçлекен Вишневский йулташ Сталинла Конституци çинчен доклад туса панă.

Кулътурă çурчĕ çумĕнчи драмкружок Павлăвăн „Йалта“ пйесине вылясa кăтартнă. Ачасен çуртĕнчи ачасем тĕрлĕрен йурăсем йурласа панă.

Оборонă ĕçне вĕренеççĕ

Тутаркас районĕнче чылай колхозсенче оборонă ĕçне лайăх вĕренме пуçларĕç. Кăсал „Дружба“ колхозра 27 çын ПВХО, 12 çын „Ворошиловский стрелок“, 9 çын ГТО значокĕсем илчĕç.

С. Мамайĕв.

ПĔЛТЕРНИ

Пайан, декабĕрĕн 8-мĕшĕнче, ПСК(б)П Обкомĕн партвĕренÿ çуртĕнче каçхине 6 сехетрен пуçласа Карл Маркс „Капиталĕн“ 1-мĕш томне вĕренекенсене вальуи консультаци пулаť.

Парти вĕрентĕвĕн çурчĕ.

Вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекен колхозниксене йалхуçалăх налогĕнчен хăтарасси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă
ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Економсовет 1938 çулти нойабĕрĕн 15-мĕшĕнче йышăннă 782-мĕш №-лĕ постановлени тăрăх, ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнаť:

Государствăн вăрман хатĕрлекен организацийĕсем патĕнче вăрман хатĕрленĕ çĕрте çулталăкран сахал мар ĕçлеме контрактациленнĕ йе çав срукlăха ĕçлеме çирĕпленнĕ колхозниксен хуçалăхĕсене çав срукlăха йалхуçалăх налогне тÿлессинчен хăтарас.

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председател заместителĕ А. Сомăв.
ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕшĕн В. Лебĕдĕв.

Шупашкар хули, 1938 çул, декабĕрĕн 3-мĕш

ТŸРЛЕТНИ

„Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн кăçалхи нойабĕрĕн 2-мĕшĕнче тухнă номĕрĕнче, „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕнче“ çакăн пек корректурăлă йăнăшсем кайнă:

Иккĕмĕш страницăра 5-мĕш уйрăмăн 2-мĕш колонкинче 5-мĕш абзацра „Большевиксен партин политикăлă ĕçĕсене“ вырăнне „практикăлă ĕçĕсене“ тесе тÿрлетсе вуламала.

Çав страницăрах 4-мĕш колонкăри 4-мĕш абзаца „Анчах рабочисемпе салтаксем ытлашши шанни вĕсемпе усаллăн шÿт тунă“ тенине „усаллăн шÿт тунă“ тесе тÿрлетмеле.

Çавăнтах, Кĕске вывăдсен виççĕмĕш абзацĕнче „пролетарилĕ“ сăмах сиксе йулнă. Вăл абзаца çапла вуламала:

„Большевиксен партийĕ социалисăмпа интернационалисăм ĕçне тĕрĕс туса пыракан тата хăйсен империалисăмлă правительствине хирĕç граждăн вăрçи организацилекен пĕртен-пĕр пролетарилĕ парти пулнă“.

Франципе Германи декларацийĕ

Декабĕрĕн 6-мĕшĕнче Парижа Германин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Риббентроп пырса çитнĕ.

Франци республикĕн президенчĕпе — Лебренпа тата правительствă пуçлăхĕпе — Даладйепе тĕл пулнă хыççăн, Риббентропна Франции йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бонне декларации çине ала пуснă. Декларацире пурĕ виçĕ пункт. Пĕрремĕш пунктра: икĕ правительствă икĕ çĕршыв хушшинче „пĕтĕмĕшлĕ мир тытса тăрас шутпа“ „мирлĕ ыркÿршĕлĕ çыхăнусем тума“ тăрăшнине кăтартнă. Иккĕмĕш пунктра çак правительствăсем иккĕш те: халъхи вăхăтра вĕсем хушшинче „территори тĕлĕшĕнчен килĕшсе таталманни пĕр ыйту та çук“, тесе пĕлтереççĕ. Франципе Германи хушшинчи халъхи чикĕсене „татăклă“ чикĕсем тесе „савăнăçлăн йышăнаççĕ“. Виççĕмĕш пунктра çак çĕршывсем „икĕ çĕршыва та интереслентерекен ыйтусем тăрăх контакт тытма“ тата „пĕр-пĕр ыйту тĕнчери лару-тăрура йăвăрлăхсем пулмали хăрушлăх кăларса тăратма пултарнă чухне пĕр-перинпе консультаци тума“ кирлине кăтартнă. Анчах та ку пунктра декларации çине ала пуснă державăсен виççĕмĕш державăсем пирки пулас „уйрăм çыхăнусем“ çинчен каласа хушса пĕтеришсем нумай.

(ТАСС).

Францири ĕç конфедерацийĕн национальнăй комитет ларăвĕ

Декабĕрĕн 5-мĕшĕнче Парижре Францири ĕç конфедерацийĕн национальнăй комитет (Францири профсойузсен пĕрлешĕвĕ) ларăвĕ уçăлнă. Лару Францире нойабĕрĕн 30-мĕшĕнчи пĕтĕмĕшлĕ забастовкă хыççăн пулса тăнă лару-тăру çинчен ыйту пăхса тухнă. Обшчĕствăнăç шухăшĕ национальнăй комитет ларăвне пысăк вырăна хураť. Национальнăй комитет решенисенчен ĕç конфедерацийĕпе Даладйе правительстви хушшинче малашнехи ĕçсем мĕнле пуласси килет. Национальнăй комитет ларăвĕ хупă иртет.

Национальнăй комитет руководителĕ Жуо ларура тухса калană чухне çапла пĕлтернĕ:

„Епĕр репрессисен хумĕ умĕнче тăратпăр. Правительствăпа хуçасем профсойузсен йухăмне пуççăр тăратса хăварма тăрăшаççĕ пулас. Вĕсем çакнашкал ăнланнине отпор парас пулаť. „Килĕшу“ тума тăрăшни çинчен калаççĕ пулсан та, пулса тăнă лару-тăрăва йăвашлатас тĕлĕшпе хуçасем кирлĕ условисем туман. Правительствă ушкăнĕсем йенчен çавах курăнаť. Пирĕн задачă — рабочи класăн ирĕклĕхĕпе интересĕсене хÿтлесси пулаť. Рабочи класăн пĕр пуçлăхлă влаç туса хума хăтланса пăхнисене хирĕç тăрас пулаť“.

(ТАСС).

Францире забастовкă йухăмĕ сарăлса пыраť

Франци правительстви рабочи класа хĕсĕрленине хирĕç протест тăвасси ытларах та ытларах сарăлса пыраť. Гаврта профсойузăн ĕçрен кăларнă çекретарĕне пĕр шухăшлă пулнине палăртса, 6 пин морйак забастовкă пуçланă. Портра 20 карапăн екипажĕсем забастовкă пуçланă. Забастовкă тăвакан морйаксен делегацийĕ сутулу флочĕн министрĕ патне пырса кайнă.

Анатри Сенă çинчи пароходствă рабочийĕсем те забастовкă пуçланă.

Трансатлантичĕски пароход компанийĕ Гаврта тăракан карапсем çинчи пĕтĕм рабочисене ĕçрен кăларма йышăннă.

(ТАСС).

Закарпат Украининчи фашиссен çарти пек отрйачĕсем

Закарпат Украинин правительстви, Берлинран хушнипе ĕçлекенскер, çарти пек „сичовые стрельцы“ йатлă фашисла отрйачĕсене тума васкавлăн тытăннă. „Сичовиксене“ Германи офицерĕсем йертсе пынипе вĕрентеççĕ, вăл офицерсене командировкă йĕркипе илсе пынă, вĕсем Закарпат Украинин правительствине пăхăнса тăраççĕ.

(ТАСС).

Сталин йачĕпе тăракан çар академинчен вĕрентсе кăларни

Декабĕрĕн 3-мĕшĕнче Сталин йачĕпе тăракан механизаципе моторизаци çар академийĕнче командăйпа инженернăй факультетсенчен командирсемпе инженерсем вĕрентсе кăларнă.

Вĕренсе тухакансене Совет Сойуз маршалĕ К. Е. Ворошилăв йулташ йачĕпе ССРС Оборонă Халăх Комиссарĕн заместителĕ — иккĕмĕш рангри çар комиссарĕ Шчаденко йулташ салам калană.

Академи пĕтернĕ командирсемпе инженерсенчен нумайăшĕ государствă екзамĕнне „отличнă“ паллăпа тытнă, дипломлă пройектсене „лайăх“ паллăпа хÿтленĕ.

Вĕренсе тухнисем вырăнне çĕнĕ смена пынă. Командăй факультетта çĕнĕрен илнисем хушшинче 27 орденоносĕц.

(ТАСС).

Автомобил шĕветнĕ газпа ĕçлет

Автотрактăр промышленнăçĕн наукăпа тĕпчев институчĕ бензин вырăнне шĕветнĕ газпа ĕçлеттерме институт хатĕрленĕ çĕнĕ автомашинăсене сăнама пуçланă. Тăватă машинă сăнаççĕ: тоннă çурă, виçĕ тоннă туртакан грузовой машинăсем, автобус тата çăмăл машинă. Баллонсемпе газ аппарачĕсене хамăрăн совет савăчĕсенче тунă.

Малтанлăха сăнаса пăхнă тăрăх, шĕветнĕ газпа ĕçлекен автомашинăсем бензинпа ĕçленĕ чухнехинчен пĕре те кайа чупмаççĕ.

Сăнавсем лайăх иртсен, автотранспăрта шĕветнĕ газ (пропан, бутан) çине куçарма пысăк майсем пулаççĕ. Шĕветнĕ газа пирĕн Совет Сойузĕнче питĕ те нумай тăваççĕ.

(ТАСС).

Беженцăсене вырнаçтарас йенĕпе ĕçлекен пĕтĕм тĕнчери комитет ларăвĕ

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин йут çĕршыв ĕçĕсен министерстви коммÿнике кăларнă. Коммÿникере декабĕрĕн 2-мĕшĕнче беженцăсене вырнаçтарас йенĕпе ĕçлекен пĕтĕм тĕнчери комитет ларăвĕ пулса иртни çинчен пĕлтернĕ. Ларура Англи, Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен, Франци, Голланди, Аргентинă представителĕсем пулнă.

Голланди делегачĕ Голланди правительстви йеврей беженцăсене Голланди Гвианине тата Голланди Вест Индине вырнаçтарма шутлани çинчен пĕлтернĕ.

Франци делегачĕ: Англи тата Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем хăйсен территорийĕсенче беженцăсене вырнаçтараççĕ пулсан, Франци правительстви 10 пин йеврейе вырнаçтарма пултараť, тесе пĕлтернĕ. Франци правительстви йеврейсене Мадагаскар утравĕ çине йама шутлаť.

Англи делегачĕ калană тăрăх, Англи правительстви йеврейсене Британи Гвианине, Кенийăна тата Танганайкăна вырнаçтарма май пуррипе çуккине сăнаса вĕренет.

(ТАСС).

Йапони влаçĕсем емигрант-йеврейсене пыма чарнă

Йапонири хаçатсем: Йапонин çар влаçĕсем Германирен тарса тухнă йеврейсене Çурçĕр тата Кăнтăр Китайри йапонĕцсен аллинчи районсене пырса кĕме чарнă, тесе çыраççĕ.

(ТАСС).

Ĕççĕрлĕх ÿсет

Англири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Англире ĕççĕр тăрса йулнисен хисепĕ нойабĕр уйăхĕ тĕлне 1.828 пин çын — кăçалхи октабĕр уйăхĕнче пулнинчен 47 пин çын ытларах, 1937 çулти нойабĕр уйăхĕнче пулнинчен 329 пин çын ытларах пулнă.

(ТАСС).

Ытлашши тырра — государствăна

** ЙЕТЕРНЕ. Мăн Йĕкĕтри „Хĕрлĕ Октабĕр“ колхоз кăçал çанталăк уйар пулнă пулсан та ырашш гектартан 125-шер пăт, тула 150-шар пăт туса илнĕ. Колхозра хылĕ кăçалхи йалхуçалăх çулĕн итогне сÿтсе-йавреç. Çакăн хыççăн колхоз государствăна 70 центнĕр тырă сутрĕ. Йалсовечĕпе пурĕ 30 тоннă сутнă.

Т. Йарандайкин.

** ТАВАЙ. Тĕмерти Смилович йачĕпе тăракан колхоз государствăна 50 центнĕр тырă сутрĕ. Тырă сутас ĕç ытти колхозсенче те лайăх пыраť.

В. Борисăв.

КИНО

„Александр Невский“

Çутă сÿнет. Екран çине сăнсем сиксе тухаççĕ те санăя шухăша VIII-мĕш ĕмĕр, хыпса илет...

Тискер, хайар, хĕнхурлă, нушалă, куççуллĕ, йунла ĕмĕр вырăс халăхĕшĕн...

Таçта-таçта иртекен хир инçетĕнче хăрнă шăмăсем таврăна тĕрленĕ, унта-кунта тутăхнă сăнăсем тăраннă, хăрнă йунпа пĕвеннĕ сăнă тасăкĕсем. Тискер, хайар, вирлĕ çавăçу иртнĕ пулъ çак хирсем, тĕмескесем урлă. Печенегсем сăтăр тунă, половцăсем çаратнă, монгол ханĕсем хăйсен çарĕсемпе умма мĕн лекнине пурне те çунтарнă, вĕлерне, пĕтернĕ...

Кĕлленнĕ йалсем, таптаннă йеакмасăр йулнă пиçенлĕ уй-хирсем.

Хĕвеланăçĕнчен ливонскин тата тевтонскин ордĕвĕсемлĕ рыцăрсем-йыттисем йавкаланса тухнă. Вĕсем Псков хулине çитнĕ, ăна туртса илнĕ.

Чиркÿ çумĕнче рыцăрсем шеренгăланса тăнă. Вĕсем тимĕрпе витĕннĕ — хăрушă, тискер, илемсĕр.

Шеренгă умĕнче Псковăн чĕркуçленсе ларнă воевочĕсем. Вĕсене сыхнă. Вĕсен хушшинче ватă, вăрçăра суранланнă воевода Павшă.

Инçе мар, çавăнтах ушкăн дружинă — вĕсем Псков хулине сыхланă, вĕсене çыхнă. Умра — Псков хĕрарăмĕсем, ачисем: макăраççĕ. Ачасене вутта пăрахаççĕ... Тискер. Калама хăрушă.

Пскова ултавпа нимĕç аллине панăскер Твердила Иванăвич крыльца çине тухаť:

— Псковичсем! Тевтон рыцăрĕсен аслă магистăрĕ, папа хушнипе вырăс çĕрĕн хуçийĕ, йулашки хут ыйтаť: — Риме пăхăнма хатĕр-и есĕр?

Кăвак çÿçлĕ Павшă Твердилăна ответлет:

— Кам хуçа тунă вăл йытта? Малтан ăна, вырăс çĕрне, илччĕрха!

— Пулмасť сан сăмахпа, Твердилă. Нимĕçе пăхăнмĕ вырăс халăхĕ. Елĕк епĕр сире пĕрре мар çĕнтернĕ, çĕнтеретпĕр халь те, вăхăт çитĕ.

Картинă хыççăн картинă, сăн хыççăн сăн иртет.

Суранланнă Псков хулинчен Новгород хулине дружинник васкаса çитет те пĕлтерет: рыцăрсем-йытăсем Псков хулине илнĕ.

... „Акă вечă чанĕ хула сывлăшне çурса йараť, вăл Новгород халăхне пухăнма хушаť.

Шавлаť вечă, вирлĕ шавлаť халăх.

— Александр Невскине воеводствăна чĕнес, çĕршыва сыхлама чĕнес!..

Самантра пухăнаť вырăс халăхĕ. Пĕтĕм вырăс халăхĕ тăшман çине, çĕкленнĕ, пĕтĕм Руç тăшман çине тухнă.

Иртеççĕ Александрăн дружинисем: хутшăнаççĕ йалсенчен, хуласенчен. Пакурсем йатнă, чукмарсем илнĕ, пуртăсем çакнă.

Чудски кÿлĕ çинче пулнă çапăçура вырăссем нимĕç рыцăрĕсене арпа-кĕрпе пек çĕмĕрсе тăкаççĕ.

.... Вирлĕ, хăйуллă, паттăр йурă йан йанăраť таврара:

Вставайте, люди русские,
На славный бой, на смертный бой!
Вставайте, люди вольные,
За нашу землю честную!
Врагам на Русь не хоживать,
Полков на Русь не важивать,
Путей на Русь не видывать,
Полей Руси не таптывать!
Живым бойцам почет и честь,
А мертвым слава вечная,
За отчий дом, за русский край
Вставайте люди вольные!..

Фильм çакăн пек картинăпа вĕçленет: тыткăна лекнĕ нимĕçсене ирĕке йанă чухне Александр Невский вĕсене çапла калаť:

„Кайăр та, йут крайсенче пурне те: Руç чĕрĕ, тесе калăр. Антив, пирĕн пата ним шикленмесĕрех хăнана килччĕр. Анчах кам та кам пирĕн пата хĕçпе килсе кĕрет — вăл хĕçренех вилет. Вырăс çĕрĕ çакăн çинче тăраť тата малала та çакăн çинчех тăрĕ!“

... Вырăс халăхĕн хăстарлăхĕ, чаплă вăйĕ, нихăçан сÿнми хĕрÿлĕхĕ, викам çĕнми улăпла вăйĕ — çак картинăра аван курăнаť. Кун çинчен, çак улăпла вăй çинчен пĕлччĕр пурте, асра тытчĕр фашисла агрессăрсем!

Ив. Давыдăв.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

ЧĂВАШ АССР СЫВЛĂХА СЫХЛАВ ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔ
ДЕЗИНФЕКТĂРСЕН
ВИÇĔ УЙĂХЛĂХ КУРСНЕ
ОРГАНИЗАЦИЛЕТ
Занятисем çак çулти декабĕрĕн 19-мĕшĕнче пуçланаççĕ.
Курса арçынсемпе хĕрарăмсене те, 6 çултан сахал мар вĕреннисене, район тата хула сывлăх пайĕсен командировкисем тăрăх çеç илеççĕ. Курсантсене стипендипе хваттер укçи 90 тенкĕ параççĕ.
Заявленисене ЧАССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн медицинă образовани пайне памала.
3—1

ШУПАШКАРТИ КООПЕРАТИВ ТЕХНИКУМНЕ
нимĕç чĕлхипе вĕрентекен
ПРЕПОДАВАТĔЛ
ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ.
Ĕçукçи — килĕшÿ тăрăх.
Районран килекенсене КЗОТ 82-мĕш статйи тăрăх çул укçи тÿлеççĕ.
Дирекци.
3—3

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран савăтне вăхăтлăх ĕçе
опытлă бухгалтĕр кирлĕ
Ĕçшĕн килĕшÿ тăрăх тÿлеççĕ.
Тир-сăран савăтне, аслă бухгалтĕр патне пымала.

Чăвашсойузăн Канаш хулинчи базине
ЙАЛАНЛĂХА
кантурта ĕçлеме 3 бухгалтĕр, çекретар-машинисткă, складра ĕçлеме 3 счетовод тата таварсемпе ĕçлекен
КИРЛĔ
Ĕçукçи — государствă нормировалийĕ тăрăх. Ĕç вăхăтĕнче ыйтса пĕлмеле.
2—2

Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕн
ПУЛĂ ХУÇАЛĂХНЕ
аслă бухгалтĕр заместителĕ, çекретар-машинисткă
КИРЛĔ.
Аслă бухгалтĕртан Соловйовран çак адрĕспе ыйтса пĕлмеле:
г. Чебоксары, ул. Ленинградская, 16,
2—1

ЧĂВАШСТРОЙТРЕСТĂН СНАБЖЕНИ ПАЙĔ
краскăсем, тимĕр, тимĕр-таварсем, фарфăртан тунă шултра роликсем, хулăм тата пĕчĕк виçеллĕ кантăк, тарă
СУТАŤ
Адрĕс: Ленинградская, 38.
Кашни кунах ирхи 12 сехетрен пуçласа ыйтса пĕлме пулаť.
5—4

Мĕнпур колхозниксене, колхозсене, рабочисемпе служăшчисене, клубсене, вулав çурчĕсене, радиоузĕлсене тата спорт организацисене пĕлсе тăма

Чăвашсойузĕн Канаш хулинчи культурă таварĕсен бази çакăн пек таварсем мĕн чухлĕ кирлĕ таран сутаť:

1) Електрофонсем—штукĕ 180 тенкĕ;
2) Домрă оркестрĕ—комплект 1120 тенкĕ, комплектра тăватă струнлă домрăсем 13 штук;
3) Проекцилĕ хунарсем—штукĕ 90 тенкĕ;
4) Балалайкăсем;
5) Мандолинăсем—штукĕ 50 тенкĕрен пуçласа 100 тенке çитиччен;
6) Йолкă капăрлатмалисем;
7) Çулпуççен бÿстсем;
8) Анодлă батарей—45 вольт,
9) Анодлă батарей (шыв тултармали)—50 вольт;
10) Елементсем—1,35—500;
11) Радиолампăсем (тĕрлĕренех);
12) Пысăк биллиардсем—штукĕ 700 тенкĕ, шăмăран тунă шарсем;
13) Биллиардсем—штукĕ 125 тенкĕ;
14) Йелтĕрсем—тĕслĕрен суртлă;
15) Конькисем—тĕслĕрен суртлă;
16) Хĕвелтухăç полушарин физикăлă карттисем,
17) Хĕвеланăç полушарин физикăлă карттисем;
18) Йевропăн физикăлă картти;
19) Азин физикăлă картти;
20) Кăнтăр Америкăн физикăлă картти;
21) Австралин физикăлă картти;
22) ССР Сойузĕн политикăлă картти;
23) Йалхуçалăх тата ача-пăча литературисем (чăвашла).
Мĕнпур районсенчи культмагсенчен, йалти магазинсенчен тата йалпосенчен ыйтăр.
3—2. ДИРЕКЦИ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 579
Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 880,